# Пуканене “чун кĕртес” тесен артистăн выртса та, упаленсе те, чĕвен тăрса та, чĕркуçленсе те выляма тивет

• 2 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

14(884) №, 2015, апрель/ака, 18

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


- Пурăнать ялта ветеран… 3 стр.
- Тăван кил ăшшине сăнлакан ÿнерçĕ. 5 стр.
- Купăста калчине йăран çинчех ÿстерме пулать. 8 стр.
- Пĕрне юратнă хушăрах теприне шырать каччă. 9 стр.





## Маннă ял

**Çапла калаççĕ хăйсем пирки Муркаш районĕнчи Коминтерн выççăлккинче пурăнакансем. Ял çыннисем каланă тăрăх, 1923 çулта таврари çичĕ ялтан куçса килнĕ кунта. Сĕнтĕр тăрăхĕнчи Шупуççемпе Апчарсем те йăва çавăрнă вăрманта. Чи кирли – тĕрлĕ ялтан пуçтарăннă халăх пĕр-пĕринпе туслă пурăннă. «Коммунист интернационалне» кĕскетсе Коминтерн теме тытăннă выççăлккăна. Тепĕр майлă, коммунистсен ялĕ. Темшĕн выççăлкки те, урамĕ те, колхозĕ те пĕр ятлă пулса тăнă вĕсен. Апла-и, капла-и, тĕлĕнмелле ĕçчен çынсем килсе вырнаçнă вăрманваррине. 60 гектар йывăç-тĕме кăкласа унта тырпул çитĕнтерме тытăннă. Шел те, Коминтерн выççăлккин историне Юнкă ял тăрăхĕн библиотекинче те тупса параймарĕç.**

### Çул çук…

Яла çитме паянхи кун нихăш енчен те çул çук. Хытă чул та сарса паман Коминтернсене. Эпир Ивановка витĕр каяс терĕмĕр. Асфальт çул вăрман хĕрри таран кăна. Малалла вара, тепĕр 700 метр – пылчăк, шыв-шур. Кĕрлĕ-çурлă вăхăтра атăсăр утса тухма та çук. Хĕллехи кунсенче çула тракторпа тасатма тытăннă юлашки вăхăтра, малтан вара маякпах çырлахнă кунта пурăнакансем. Выççăлккăра тĕпленнисем çил-тăманра çула уçса панишĕн Юнкă ял тăрăхне тем пекех тав тăваççĕ халĕ. Эпир Коминтерна Юнкă ял тăрăхĕн администрацийĕнче тăрăшакан çар пайĕн инспекторĕпе Галина Маряшкинăпа çул тытрăмăр. Телей пур иккен, вăрмана кĕнĕ çĕрти шыв пĕр кун маларах юхса кайма ĕлкĕрнĕ. Унсăрăн атăпа та каçаяс çукчĕ. Пусмассерен кăпăшка юр путса анать пулин те тĕпĕнче ытлашши йĕпех марччĕ. Мăнкун умĕнхи шăматкун кунĕпех лÿшкенĕ çурхи çумăр та çула пăртак хытарма ĕлкĕрнĕ.

### …çуратакан пур

Вăрманпа утнă май выççăлккăри Марина Ивановăна тĕлпултăмăр. Кĕçех ача çуратма хатĕрленекенскер çурăмĕ хыçне пысăк кутамкка çакса Муркаша кайма тухнă. Урине калуш, ăшă çăм чăлха тăхăннăскер вăрманпа вĕçтерсе çеç пырать. Ял хĕрарăмĕсем çирĕп те маттур çав. Ирех тăрса кил-çуртри, хуçалăхри ĕçе вĕçленĕ хыççăн больницăна кайма тухнă вăл. Хăрамасăр вăрманпа пĕчченех утни те тĕлĕнтерчĕ.

– Никамран шикленмелли те çук. Хăнăхнă эпир ку çула. Кашни йывăç-тĕме паллатпăр. Кунне темиçе те тухса кĕме пултаратпăр, – тесе малалла уттарчĕ 41 çулти Марина. Тăваттăмĕшне çуратма хатĕрленет хĕрарăм. Аслисем çитĕннĕ унăн, пĕр ывăлĕ 22-ре, иккĕмĕшĕ 20-ре, чи кĕçĕнни – 9 çулта. «Кун пек пĕчĕк ялта та çуратакансем пулсан Коминтерн пурăнать-ха» текен шухăш вĕлтлетрĕ пуçра. Пĕчĕк ачапа ял тата та пуянланать, илемленет çеç. Вăт епле, маттур та ĕçчен чăваш хĕрарăмне ялта кăвак çулăм çунманни те, çул çукки те хăратмасть.

ÇĂЛТĂР ÇŨПÇИ

## Çурхи юр пек ирĕлет… чăваш



Владимир ЛЕОНТЬЕВ, чăнчăн чăваш каччи

Самарпа Тутарстан тăрăхне кашни çулах концертпа тухса çÿренĕрен унти чăвашсем тăван пекех хаклă та çывăх маншăн. Зала кĕмĕл çÿçлĕ асаннесемпе кукамайсем ытларах пырса ларнинчен тахçанах тĕлĕнме пăрахнă. Ялта халь çамрăксем çук, пулсан та концерт кăсăклантармасть вĕсене. Пĕлетĕп, аякри тăвансем пире кĕтеççĕ, тунсăхлаççĕ. Тарават та ырă кăмăллă, тĕлĕнмелле ăшă чунлă унти халăх. Шел те, Самар тăрăхĕнчи чăвашсен йышĕ те чаксах пырать. Аслă ăру чăвашла калаçать-ха, вĕсен ачисем ăнланаççĕ, мăнукĕсемшĕн вара тăван чĕлхе – ют чĕлхе вырăнĕнчех. Çуркунне юр ирĕлнĕ пек чăвашсем те кунран-кун çухалса пыни сисĕнет. Калама çук шел! «Тахçан кунта та чăвашсем пурăннă», – тесе те калĕç акă пĕр вăхăтран. Пенза тăрăхĕнче те çав ÿкерчĕкех. Вĕсемпе пĕрлех чăвашăн мĕн чухлĕ йăли-йĕрки, культури ĕмĕрлĕхех çухалать-çке. Мĕн чухлĕ пуянлăх пĕтет. Нивушлĕ çав Пенза, Самар чăвашĕсене ниепле те сыхласа хăварма çук?

Чăваш юрăçисем пирки виç сăмах каламасан чунăм чăтмасть. Паян вĕсем кĕрхи вăрманти кăмпа пекех йышлă. Ятнешывне астуса пĕтерме те çук. Вĕсем музыка училищинче пĕлÿ илмен, нота мĕнне пĕлмеççĕ, чĕрĕ сасăпа юрламаççĕ. Чи кирли – пурте сцена çине тухасшăн. Мĕн шыраççĕ унта, ăнланмастăп. Чечняра, Узбекистанпа Азербайджанра, Беларуçпа Молдавире, Китайра фонограммăпа юрлама тахçанах чарнă. Çакăншăн питĕ пысăк штраф кĕтет. Тĕслĕхрен, Китайра 12 пин доллар кăларса хума тивет. Ун хыççăн халăха урăх суяс та килмĕ. Пирĕн патра ку енĕпе хăçан та пулсан йĕрке пулĕ-ши?

Наци телекуравне Турра кĕтнĕ пек кĕтрĕм. Анчах вăл та чăвашлăхпа çырлахтармасть. Вырăсла кăларăм пирĕн ахаль те питĕ нумай, 100 ытла канал йăлăхтарсах çитерет. Тутарсенчен хăçан тĕслĕх илĕпĕрши, вĕсен кăларăмĕсен 99 проценчĕ хăйсен чĕлхипе янăрать, рекламăна çеç вырăсла çавăрттараççĕ. Хамăрăн кино, клипсем сахал-и? Чăвашла куçарнă фильмсене, каçарăр та, кам та пулин куратьши?

Мăнкун эрни пырать. Эпир пĕчĕк чухне çак уяв та илемлĕрехчĕ. Мĕнпур ача-пăча кас вĕçне чуччу ярăнма тухатчĕ. Каç пуличченех çерем çинче темĕн тĕрлĕ вăйă выляттăмăр. Пирĕн ратне пысăк пулнă, пĕр кунра атте-анне 12 киле çитетчĕ. Шел те, халь ялсенче рет çÿреме те пăрахаççĕ. Кĕр сăрисем те пĕтрĕç. Выльăх пуссан тăванпĕтене какай çиме чĕнетчĕç. Ку йăла та çухалчĕ. Çынсен чунĕсем чурăсланма пуçларĕç-и? Юбилея, туя, вилсен юлашки çула ăсатма çеç каять халăх. Пĕр-пĕрин патне ахаль, курса калаçас тесе çÿреме пăрахрĕç.

ЮБИЛЕЙ

# Пуканешĕн юлташ – чăн хурăнташ

## *Чăваш патшалăх пукане театрĕ 70 çул тултарчĕ*



• СЕРГЕЙ МЕРЗЛЯКОВ.

*1943 çулта Етĕрнере Ленинград блокадинчен эвакуациленнĕ артистсем тата театра юратакан вырăнти çынсем куçса çӳрекен Пукане театрĕ йĕркеленĕ. Çулталăкран çак ушкăна Шупашкарти Пионерсен çуртĕнче кĕтес уйăрса панă. Çапах артистсем республикăри ытти театр пекех 1945 çулта тулли хăватпа ĕçлеме пуçлани паллă. Шăпах çакăнтан çырăнать унăн историйĕ. Пукане театрĕн йĕркелӳçи тата пĕрремĕш режиссерĕ – Сергей Мерзляков. Вăл пултаруллă чăваш çамрăкĕсене пĕр йыша пуçтарнă. "Три подружки" спектакльпе пуçланнă репертуар пуянлансах пынă.*

*1958 çулта чăваш пуканеçисемшĕн çĕнĕ тапхăр пуçланнине палăртмалла. Ун чухне артистсем Чăваш патшалăх филармони йышĕнчен уйрăлса уйрăммăн ĕçлеме пуçланă. Тĕнчипе паллă Сергей Образцовăн вĕренекенĕ Михаил Антонов ертӳçĕ тилхепине тытнă.*

*Çак вăхăтра тĕрлĕ çурта куçнă Пукане театрĕ. Пур çĕрте те хăйĕн куракнне тупнă вăл. Театр аталанăвне пултаруллă артистсем хăйсен тӳпине хывнă. 70 çул хушшинче сцена ăстисем 400-е яхăн спектакль, шоу, театрализациленĕ программа кăтартнă. Паян репертуарта – 50 ытла ĕç. Чăвашла тата вырăсла спектакльсем куракансăн кăсăклă.*

*Хальхи театр ĕçне иккĕн – директор, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Елизавета Абрамова тата пултарулăх ертӳçи, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Юрий Филиппов – йĕркелесе пыраççĕ.*

*Пукане театрĕ 70 çулхи юбилейне хăйне евĕр пулăмпа кĕтсе илчĕ. Сергей Мерзляков лартнă "Виçĕ хĕр-упраç" спектакле çĕнĕрен сцена çине кăларчĕ вăл. Çакă артистсемшĕн те, куракансемшĕн те сав тери пĕлтерĕшлĕ.*

*Çапах Пукане театрĕ ыттисенчен мĕнпе уйрăлса тăрать-ши? "Ытти театрта артистсем утса-чупса çӳреççĕ пулсассăн пирĕн выртса та, упаленсе те, чĕвен тăрса та, чĕркуçленсе утса та выляма лекет", – ăнлантарать йăл кулса тĕп режиссер.*

**– Юрий Михайлович, нумаях пулмасть театр çуртне юсаса çĕнетрĕç. Калăр-ха, çакăн хыççăн мĕн улшăнчĕ?**

Унччен пĕчĕк залти сцена çинче çеç спектакльсем кăтартаттăмăр. Халĕ ытларах куракана йышăнма май пур. Пысăк зал валли спектакльсем хатĕрлетпĕр. Малтанхисене те анлăлатса çĕнететпĕр. Тĕслĕхрен, "Уйăх çинчи пике", "Царевна-лягушка" ĕçсене пĕчĕк залтан пысăккине куçартăмăр. Çав вăхăтрах пĕчĕк залти спектакльсене те кăтартма чарăнман.

**– Ял ачисем спектакль курма тăтăш килеççĕ-и?**

– Чуна ыраттаракан ыйту ку. Çакăн тавра министерство ĕçченĕсемпе пĕрле "çавра сĕтел" те ирттертĕмĕр. Саккун тăрăх шкул автобусĕсен район территорийĕнчен тухма чăрмавлă. Хулана килмешкĕн специалистсен пĕр купа хут алă пустарма тивет. Пурпĕрех лару-тăру лайăх енне улшăнасса шанатпăр.

Çапах та юлашки вăхăтра ашшĕ-амăшĕ ачисене килти машинăпа театра илсе килме пуçларĕ. Ушкăнпа та пуçтарăнса тухаççĕ вĕсем.

Хамăр та спектакльсемпе ялсене тухса çӳретпĕр. Анчах эпир килнине пурте пĕлмеççĕ иккен. Унсăр пуçне ял тăрăхĕсенче ача сахал. Çавăнпах хăш чухне çула тухни хамăршăн тăкаклă. Апла пулин те пушă вăхăт тупăнсанах районсене çитсе килме тăрăшатпăр. Çитес вăхăтра Элĕк, Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕсене кайма планланă.

"Ака уйăхĕнчен çынсем клуба çӳреме пăрахаççĕ", – теме пăхать вырăнти культура центрĕн хăш-пĕр пуçлăхĕ. Мĕншĕн çапла калаççĕ? Вĕсен, район центрĕнче пурăнакансен, яла ĕçе çӳрекенсен, клуб уçас килмест. Çакă та артистсене ура хурать.

**– Эсир куллен 2-3-шер спектакль кăтартатăр. Театрта вылянипе çырлахмастăр, ача сачĕсене, шкула çитетĕр...**

– Унта кăна та мар. Больницăсенче те, реабилитаци центрĕсенче те кĕтеççĕ пире. Республикăри Хĕрарăмсен канашĕпе пĕрле ятарлă проектсем пурнăçа кĕртетпĕр. Тĕрмесенче "Турă патне çырнă 14 çыру", "Çăлтăр ачи", "Раштав касĕ умĕн" спектакльсем кăтартатпăр.

**– Пĕчĕк ачасем театра хăйсен тĕллĕн килеймеççĕ. Вĕсем ашшĕ-амăшĕпе пĕрле çӳреççĕ. Мĕнле шухăшлатăр, сирĕн спектакльсем аслисемшĕн интереслĕ-и?**

– Паллах. Çитĕннисемшĕн те ачалăхри туйăмсем хаклă. Вĕсем пурте юмах тĕнчине лекме, асамлă сăнарсемпе тĕл пулма ĕмĕтленнĕ. Сăнатăп та, спектакль вăхăтĕнче вĕсем хăйсем те ачана çаврăнаççĕ.

**– Тĕнчипе паллă авторсен пьесисене сцена çине кăларатăр. Репертуарта чăваш çыравçисен ĕçĕсем те пур. Раиса Сарпин "Уйăх çинчи хĕр", Ольга Туркайăн "Шурă Шупашкар юмахĕ", Ева Лисинăн "Хупах хăлха Илюк"... спектаклĕсене куракан ăшшăн йышăнни иккĕлентермест. Ачасене килĕшекеннине суйласа илме çăмăл-и?**

– Паянхи куншăн çивĕч темăна хускататпăр. Тĕслĕхрен, çак самантра аннене юратни çитмест. "Çăлтăр ачи" пьесăра тĕнчери чи сывăх çын çинчен каласу пырать. Е хупах хăлха Илюк çӳл çӳреме килĕштерет, çав вăхăтрах тăван çĕршыва юратать.

Пирĕншĕн чăваш произведенийĕсем тĕнчипе паллă авторсен ĕçĕсемпе пĕр шайра. Вĕсене пĕр сцена çинче çав артистсемех выляççĕ. Унсăр пуçне чăваш авторĕсен спектаклĕсемпе Пĕтĕм тĕнчери фестивальсене хутшăнатпăр. Унта наци культурине, йăли-йĕркине кăтартатпăр. Пирĕн ĕç урлă куракансем пĕтĕм чăваш çĕршывне хаклаççĕ.

**– Ахăртнех, пур фестивале хутшăнма май çук. Ăста каяссине мĕнле палăртатăр?**

– Хальччен ăçта пулман – çавăнта çитсе курас килет. Йыхрав нумай, вĕсенчен суйласа илмелле. Кăçал Казахстанри "Ассалаумагалейкум" фестивале каясшăн. Хусанта йĕркелекен тĕрĕк халăхĕсен "Науруз" фестиваль-форумĕнчен те юлма юрамасть.

Чăваш Республикинче иртекен Пĕтĕм тĕнчери "Пĕрешкел пулмасан та юрать" фестивале çӳллĕ шайра йĕркелĕпĕр. Малтанхи уява Европа артисчĕсем йышлă килнĕччĕ. Халĕ улшăнусем хыççăн пурте хутшăнаймĕç. Анчах кăнтăр енчи халăхсене чĕнсе илетпĕрех. Беларуçпа Казахстан пуканеçисем пирĕн тăрăха килме палăртнă та ĕнтĕ. Унсăр пуçне Раççей театрĕсем пуçтарăнса килĕç. Сăмах май, сусăр ачасем валли йĕркеленĕ çакнашкал фестиваль тĕнчере урăх çук.



• ЮРИЙ ФИЛИППОВ.

**– Валентина Элпи 100 çул тултарнă тĕле унăн ĕçĕ тăрăх "Эп халь телейлĕ" спектакль кăлартăр. Ăна куракан мĕнле йышăнчĕ? Автор хăй хак пама ĕлкĕрчĕ-и?**

– Ку спектакль ачасене те, театр киритикĕсене те килĕшрĕ. Кăçал "Науруз" фестивале шăпах çак ĕçе илсе кайăпăр.

Пурнăç кăшт хĕсĕнсенех лару-тăру япăхланчĕ теме пăхатпăр. Спектакльти ĕç-пуçа тишкерер-ха: килте çиме çăкăр та пулман. Шкула кайнăшăн, кĕнеке панăшăн мĕн тери савăнать ача. Юрпикепе Хĕл Мучине курни те тĕлĕнтермĕш уншăн. Ку спектакль ачасене пурнăçа, çăкăра, шкула çӳренине хаклама вĕрентет.

Сывлăхĕ хавшанине пула Валентина Элпи хăй килсе кураймарĕ. Çапах çак спектакле хатĕрленине пĕлнĕ вăл. Унпа урамра тĕлпулсан та калаçаттăмăр. Вăл питĕ савăннăччĕ.

**– Шкул программинчи авторсен ĕçĕсемпе паллаштаратăр. Кĕçĕннисем валли çырнă юмахсене те курма пулать. Çапах залта хăш ӳсĕмри ачасем йышлăрах?**

– Историе тишкерес пулсан, малтан Пукане театрĕ çитĕннисем валли, сăмахран, "Фауст", "Гамлет" спектакльсем хатĕрленĕ. Кайран ачасен театрне çаврăннă вăл.

Халĕ репертуарта тĕрлĕ ӳсĕмрисем валли спектакльсем пур. Кĕçĕннисене те, аслисене те, вĕсен ашшĕ-амăшне те хапăл эпир. Çитĕннисем валли лартнă спектакльсем артистсен пултарулăх шайне хăпартма та пулăшаççĕ.

**– РФ тава тивĕçлĕ артистки Надежда Алферова актерсен çемйинче çуралнă. Уроксем хыççăнах театра чупнине аса илет вăл. Сцена çинчи асамлăха ун чухнех туйса илнĕ. Хальхи артистсен ачисем спектакль курма килеççĕ-и?**

– Паллах. Вĕсем пĕчĕкренех артистсемпе хутшăнаççĕ. Спектакль хыççăн хăйсен шухăшне пĕлтереççĕ. Эпĕ ĕçлеме пуçланăрапа пăхас тăк – артистсен театрта ӳснĕ ачисем çемье çаврăнчĕç. Халĕ хăйсен тĕпренчĕкĕсене килеççĕ.

Акă Надежда Алферовăн, Любовь Никитинăн, Ира Васильевăн... ачисем çемьеллĕ.

**– Ывăл-хĕре, паллах, пĕчĕкренех театра юратма хăнăхтармалла.**

– Хальхи ачасем хăвăрт аталанаççĕ. Икĕ çултанах сцена çинчи ĕç-пуçа ăнланма пуçлаççĕ вĕсем. Малтан ашшĕ-амăшĕн юмах кĕнекине вуласа памалла. Кайран пĕрле сӳтсе явма çăмăлрах пултăр.

Театр çумĕнче çамрăк театралсен шкулĕ ĕçлет. Нумаях пулмасть çыравçăсен конкурсне ирттертĕмĕр. Вĕсем тĕрлĕ юмах шухăшласа каларнă.

**– "Чĕнтĕрĕ чаршав" конкурсра Пукане театрĕн ĕçне çулсеренех пысăка хурса хаклаççĕ. Кăçал "Раштав умĕнхи каç" ĕç "Çулталăкри чи лайăх спектакль" ята тивĕçрĕ.**

– Пукане театрне ыттисемпе танлашма çăмăлах мар, мĕншĕн тесен пирĕн спектакльсем кĕскерех. Ачасем 2 сехете яхăн пăхса лараймаççĕ, хускалма пуçлаççĕ.

"Чĕнтĕрлĕ чаршав" конкурс артистсемшĕн питĕ кирлĕ. Ун урлă халь ĕçлеме пуçлаканнисен хăйсене кăтартма май пур.

**– 70 çулхи юбилей сезонĕ тата мĕнпе асра юлĕ?**

– Кĕркунне Юхма Мишшин ĕçĕ тăрăх "Мулкач валли шурă кĕрĕк" спектакль кăтартасшăн. Ăна иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче лартнă. Çав вăхăтра ĕçленĕ артистсем те ку ĕçе çĕнĕрен сцена çине кăларасшăн.

**– Пирĕн вулакансене мĕн калас килет?**

– Пурнăç йывăрлăхĕ çинчен манас килсен, çивĕч ыйту хуравне хăвăр тĕллĕн тупаймасан юмах тĕнчине килĕр. Çакă сире çăмăллăх кӳрĕ.

**– Тавах калаçушăн.**

Çак эрнере Пукане театрĕн ĕçченĕсене артистсене куракансем саламларĕç. ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов вĕсене ывăл-хĕре пĕчĕкренех тăван культурăна, наци юррикĕввине юратма, хисеплеме вĕрентнĕшĕн тав турĕ. Театр ĕçченĕсенчен нумайăшĕ Хисеп хучĕпе Тав çырăвне тивĕçрĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА хатĕрленĕ.**





ТĂРĔ КАЛАÇУ

# Владимир ПУТИН: "Куç хăрать те..."

**Раççей Президенчĕ Владимир Путин ака уйăхĕн 16-мĕшĕнче çĕршыв гражданĕсемпе йăлана кĕнĕ тӳрĕ калаçу ирттерчĕ.**

Владимир Владимирович хăйĕн сăмахне çулталăка пĕтĕмлетнинчен пуçларĕ. Чи калаçтараканни, паллах, Украинăри лару-тăру, тулашри кăткăс экономика. Çĕршывăн шалти хыпарсен хушшинче вара кăмăлли сахал мар. Инфляци хăвăртлăхне чакарма май килнĕ. Нефть уçласси, тĕштырă тухăçĕ ӳснĕ. Ӳснисен йышĕнчех – ача çураласси те. Çын вилесси вара чакнă. Çурт-йĕр çĕклесси ăнăçлă пырать. Владимир Путин кун пекки совет тапхăрĕнче те пулманнине палăртрĕ – 82 млн тăваткал метр. Экономика чăн секторĕ валли – 250 млрд тенкĕ, авиастроени валли – 100 млрд тенкĕ, ĕç рынокĕ валли 83 млрд тенкĕ ытла уйăрма палăртнă. Пенсисене çулталăк пуçламăшĕнче индексациленĕ. Налук сферинче çĕнĕлĕхсем кĕртнĕ. Сăмахран, хăйсен ĕçне пуçласа йĕркелекенсене малтанхи икĕ çул налук тӳлессинчен хăтарăççĕ. Чăн та, çакă чи малтанах ялти предпринимательсемпе çыхăннă. Бизнес валли лайăхрах условисем йĕркелемеллине палăртрĕ Владимир Путин. Управлени ĕçне, право хуралне, суд тытăмне çĕнетмелле. "Ку – нумай енлĕ ĕç, анчах та куç хăрать те алă тăвать, пирĕн те çапла пулмалла", – терĕ Президент.

Анăç экономика санкцийĕсем Раççее ырă витĕм те кӳчĕç – хамăрăн тавар туса кăларакансене пулăшу мелĕ ку. Анчах та патшалăх енчен те тĕрев кирлĕ. Ялхуçалăхне пулăшмалли программăна хатĕрлесе çитерни ĕнтĕ.

Лару-тăру çапах та çăмăл мар. Экономикăна ураланма икĕ çул кирлех иккенне палăртрĕ Раççей Президенчĕ.

Умра чи чаплă, чи çутă, чи мăнаçлă уяв – Çĕнтерӳ кунĕ. Хăрушă çав вăрçăра малашлăхшăн пĕр енче кĕрешнĕ çĕршывсен ертӳçисем савăнăçа пĕрле пайлама Мускава килмессе те пултараççĕ. "Ку – пирĕн уяв. Эпир çĕнтерӳçĕсен ăрăвне пуç таятпăр", – палăртрĕ Владимир Путин.

"Тӳрĕ лини" валли пурĕ 3 миллиона яхăн ыйту йышăннă. 3 сехет те 57 минутра Раççей Президенчĕ Владимир Путин 74 ыйтăва хуравлама ĕлкĕрчĕ.

**/Хамăр инф/.**

КУÇА-КУÇĂН

# Хĕвеллĕ урам хĕвел çутипе кăна çуталать...

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çынсемпе куçа-куçăн тĕл пулса калаçассине ырă йăлана çаврăнă. Иртнĕ эрнере Михаил Васильевич граждансене Раççей Федерацийĕн Президенчĕн йышăну пӳлĕмĕнче кĕтсе илнĕ.**

Хăш-пĕр ыйтăва, паллах, вырăнти муниципалитет шайĕнче те татса пама пулать. Анчах çынсем çӳллĕ шайра пулăшу ыйтнин сăлтавĕ те "вăтам влаçăн" çаврăнăçусăрлăхĕпе çыхăннă, те явапсăрлăхĕпе, тен, çынсем республика Пуçлăхне ытларах шанаççĕ – йышăну пӳлĕмне халăх чылайăн пынă. Пулăшу ыйтакансем ытларах харпăр хăйне хумхантаракан ыйтусене хускатнă – кивĕ çуртран хăтлă хваттере хăçан куçасси таранах. Çав вăхăтрах пурне те пăшăрхантараканнисене те куçран вĕçертмен – Вăрмар районĕнчи Çĕнĕ Кавалсене райцентрпа ял хушшинче тротуар çукки пăшăрхантарать, Çĕрпӳ районĕнчи Тапанарти Хĕвеллĕ урамра çутă çук.

Кашни ыйтăвах тĕплĕ итленĕ Михаил Васильевич, пулăшма шантарнă. Апла "Богданка" микрорайонта пурăнакансем 3-4 çулта хăтлă çуртсене куçĕç, Хĕвеллĕ урам та хĕвел çутипе кăна çуталмĕ – унти çуртсене те, урама та электричество çитмелле.

**М.МИХАЙЛОВА.**

ХĂРУШСĂРЛĂХ

# Çӳп-çаппа типĕ курăк калаçтараççĕ

**Ейӳ сарăлас хăрушлăх иртсе кайрĕ çеç, пушарнăйсен умне тепĕр çивĕч ыйту тухса та тăчĕ: шăпах çак вăхăтра «хĕрлĕ автан» алхасас хăрушлăх ӳсет. Ара, çуркунне çитсен чылайăшĕ типĕ курăка çунтарма юраманнине пăхмасăрах ăна тивертме тытăнать. Хăрушсăрлăха пăхăнмаллине темĕн чухлĕ каласан та ыйту çивĕчлĕхĕ пачах чакмасть. Раççей МЧСĕн республикăри тĕп управленийĕн пуçлăхĕ Станислав Антонов кĕçнерникун журналистсемпе шăпах çак ыйту тавра калаçрĕ те.**

– Хакасири йывăр лару-тăрăва пурте куратпăр. Типĕ курăк Бурятире те кĕлленет паян. Вăл хăйне-хăй çунмасть, ăна çын тивертет. Этем хăрушă шайне ăнланманнипе çыхăннă çакă. Мĕн хистет-ха çапла тума? Тĕп сăлтавĕ, паллах, кашни хăйĕн кил таврашне кивĕ курăкран, çӳп-çапран тасатма хăтланнипе çыхăннă, – пуçларĕ сăмахне Станислав Юрьевич.

2010 çула аса илчĕ вăл. Çанталăк типĕ пулнăран пĕчĕк çулăмранах пысăк пушар тухнă тĕслĕхсемпе палăрса юлнăччĕ çав çу. Кун пекки текех ан пултăр тесен, паллах, хамăрăн тăрăшмалла.

Пушар хăрушсăрлăхĕн енĕпе иртнĕ çулхи инкексене те аса илтерчĕ Станислав Антонов. Ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи пĕр кил хуçи пахчари типĕ курăка çунтарма тытăннă. Хĕлхем кĕтмен çĕртен мунча çине сиксе ӳкнĕ те 5-6 минутрах унран нимĕн те тăрса юлман. Тепĕр кун тӳрех икĕ пушар алхаснă. Типĕ курăка тивертнĕренех Вăрнарта тӳрех 12 çурт çуннă. Çав кунах Пăрачкав районĕнче те асăннă сăлтавпах 2 хуçалăх шар курнă. Акан 21-мĕшĕнче пĕри пахчара çӳп-çап çунтарнă май кăвайт кӳршин хуралтисем çине вĕçнĕ, пушар тухнă. Çу уйăхĕн 13-мĕшĕнче Çĕрпӳре «хĕрлĕ автан» алхаснин сăлтавĕ те çӳп-çап çунтарнипе çыхăннă.

– Ку тĕслĕхсене мĕншĕн аса илетĕп-ха? Курăк çунтарнă чухне асăрханулла пулмалли пирки яланах калаçатпăр. Витĕмĕ сахаллине курах юр кайнă-кайманах пушарсем тухас хăрушлăх ӳсессе кĕтеççĕ специалистсем. Паллах, кашнинчех, кун пек тĕслĕхсем пулмасса шанас килет. Темле пулсан та çӳп-çап та, курăк та, вăрман та тивертмесĕр çунмасть, – тет республикăн тĕп пушарнăйĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа республикăра пушар тухнă 293 тĕслĕхе шута илнĕ. Вĕсенче 44 çын пурнăçĕ татăлнă. Курăк çунтарнипе халех 32 пушар тухнă. Юр вара тин кайнă-ха. Çав вăхăтрах çак кунсенче тискер кайăк тытма юракан тапхăр пуçланать, сунарçăсем вăрманта час-часах кăвайт чĕртеççĕ, çӳпĕ çунтараççĕ. Пахча-дачăра ĕçлемелли вăхăт та çитнĕ – пурте хăйсен лаптăкĕсене тасатасшăн. Кунта та инкек тухасран сехре хăпать. Май уявĕсем çывхарсах пыраççĕ – чылайăшĕ çак кунсенче çутçанталăка тухать.

Кашнин яваплăха туйса асăрханулла пулмалла! Шел, пушар сăлтавĕ хăйсенче иккенне çирĕплетсен яваплăх тытасси те хăратмасть çынсене. Çулăм явăннă тĕслĕх нумайланнăран пĕр-пĕр тăрăхра е республикăра пушар хăрушлăхĕ ӳснĕрен ятарлă режим кĕртсен вĕсем икĕ хутчен те ӳсеççĕ. Сăмахран, пушар хăрушсăрлăхĕн нормисене пăснăшăн ахаль çынсене ытти чухне 1000-1500 тенкĕ штрафлаççĕ, должноçрисене – 6-15 пин тенкĕ. Юридици сăпачĕсемшĕн вăл 150-200 пин тенкĕпе танлашать. Пушарсем ӳснĕрен ятарлă режим кĕртсен штрафсем 2-4 пин тенкĕпе, 15-30 пин тенкĕпе, 400-500 пин тенкĕпе танлашĕç. Паллах, кĕсьене аванах пушатма тивет. Çапах укçинчен ытла хамăрăн пурнăç, хăрушсăрлăх хаклă.

– Йĕпе-сапа ыттисен кăмăлне пусарать пулин те, пире, пушарнăйсене, çумăрлă-пĕлĕтлĕ çанталăк савăнтарать çеç. Çавăнпах паянхи çанталăк та пирĕншĕн чухах, – тет Станислав Юрьевич. – Паллах, пахчари çӳп-çапа çунтарма чаракан саккун çук. Ăна тивертме юрать. Анчах та нормăсене пăхăнмалла. Хăрушсăрлăхпа тивĕçтермелле. Çунтаракан вырăнтан хуралтăсем 50 метрта вырнаçмалла. Çулăм чĕртнĕ вырăнтан 20-30 метр радиусра лаптăк таса пулмалла, 1,4 метр сарлакăш чавнă йĕр кирлĕ. Ăнсăртран çулăм сарăласран алă айĕнче витрепе шыв е пушар сӳнтермелли ытти хатĕр тытмалла. Чи кирли – çанталăк çилсĕр, лăпкă пулмалла! – яваплăха туянсем илтессе, итлессе шанса калать Станислав Антонов.

Пушарнăйсем кашни çынна сăнаса-сыхласа ĕлкĕреймесси паллă. Çавăнпах асăрханулăх, хăрушсăрлăх пирки хамăрăн та манас марччĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Паттăрсемпе мухтанатпăр

**Марина ТУМАЛАНОВА**

**Манăн асатте, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Роман Григорьев, 1980 çулта çут тĕнчерен уйрăлнă. Пĕчĕк икĕ мăнукне курма ĕлкĕрнĕ вăл. Килте унăн пысăклатнă сăнӳкерчĕкĕ, орден-медалĕ упранать. Çывăх тăвансем унăн паттăрлăхĕ çинчен темиçе хут та каласа кăтартнă, пурпĕрех çĕнĕрен итлес килет.**

**Хĕрӳ çапăçу пынă. Çыхăну кабелĕ татăлнине пула лару-тăру пушшех кăткăсланнă. Йĕри-тавра пуля вĕçнĕ, снаряд çурăлнă, юн юхнă... Салтаксене çыхăнăва йĕркелеме хушнă. Пĕри, тепри, виççĕмĕшĕ... таврăнайман. Вырăна çитиччен тăшман персе вĕлернĕ вĕсене. Çав салтаксем вилессине туйса-пĕлсе малалла ыткăнни хăех – паттăрлăх. Манăн асатте çыхăну кабельне сыпăнтарма май тупнă. Телейĕ пулнах çав унăн. Çакăншăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденне тивĕçнĕ. Мухтанатпăр эпир Роман Григорьевичпа. Ун çинчен мăнукĕсен ачисем те пĕлеççĕ, истори урокĕнче тантăшĕсене каласа кăтартаççĕ. Вут-çулăм витĕр тухнă паттăра эпир асран кăлармăпăр.**

**"Манăн кукаçи Александр Беззубов 16 çулта вăрçа тухса кайнă. Минометчик пулнă. 18 çулта киле Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, анчах 2 урасăр таврăннă", – çырать социаллă сайтра пĕр шкулта вĕреннĕ Ольга Михайлова. Авă еплерех çаврăнса килнĕ шăпа. Пурпĕр пурăнма ăнтăлнă, хăйĕн хыççăн ырă йĕр хăварма тăрăшнă çав çамрăк.**

**Çуралнă тăрăхри Етĕрне районĕнчи Ирçери вăрçă ветеранĕсем çаплипех куç умĕнче. Ача чухне нумайăннччĕ вĕсем. Василий Никифоров çинчен "Пурăнать ялта танкист" ятпа журналта пичетлесе кăларнăччĕ. Алексей Падеров тавралăх историне лайăх пĕлетчĕ. Яков Алексеев чӳрече рами, алăк ăсталатчĕ. Ывăлне те çак ĕçе хăнăхтарнăччĕ. Петр Ермаков мăшăрĕ çĕре кĕрсен хуçалăха çирĕп тытса пычĕ. Ялти хĕрĕ, мăнукĕсем пулăшса тăчĕç ăна... Фронтовиксем тавралăх аталанăвне пысăк тӳпе хывнă. Анчах Аслă Çĕнтерĕве çывхартнисен йышĕ çулсеренех чакса пычĕ. Вĕсемсĕр урам, ял пушанса юлчĕ...**

**Ирçе шкул музейĕнче, ытти çĕрти пекех, вăрçă ветеранĕсен кун-çулĕпе паллашма пулать. Çакăнта упранакан документсем нихăçан та хăйĕн хакне çухатмĕç. Музей экспонатсемпе, рефератсемпе, тĕпчевсемпе пуянланса пыни савăнтарать çеç.**

**Телее, ветерансем пурăнаççĕ-ха. Вĕсен аса илĕвĕ çамрăк ăрушăн нимрен хаклă. Куçа-куçăн калаçнине, паллах, астуса юлмалла, çырса хăвармалла.**

**Халĕ çĕршывĕпех Аслă Çĕнтерĕве халаллана мероприятисем йĕркелеççĕ. Паллăраххисене аса илтерсе хăварас килет. Унта пурин те – ватти-вĕттин, çамрăккин – хутшăнма пулать. Çĕмĕрлери "ЭКА" общество организацийĕ, тĕслĕхрен, "Çĕнтерӳ хунавĕ" акци пуçарса янă. Ăна ЧР çутçанталăк министерстви те ырланă. Кĕçех ял тăрăхĕсене уяв тĕлне хатĕрленĕ чечек клумбисем илем кӳрĕç. Çавнашкалах шкул ачисем валли экскурсисем йĕркелеме пуçланине каласа хăвармалла. Çитĕнекен ăрун тĕрлĕ вырăнти Çĕнтерӳ скверĕсене, вăрçă хутшăннисен ячĕпе çĕкленĕ палăксене курса çаврăнма май пулĕ.**

**Республикăра "Çĕнтерӳ Ялавĕ умĕнчи хуралçă" патриот акцийĕ старт илчĕ. Вăл майăн 8-мĕшĕнчен вĕренӳ учрежденийĕсенче иртĕ.**

**Вĕренекенсем "Çĕнтерӳ пирĕ" хатĕрлеççĕ. Ку проект республикăри Хĕрарăмсен канашĕ пулăшнипе пурнăçланать. Ун çине вăрçăран таврăнман паттăрсен ячĕсене тĕрлесе çыраççĕ. Ку ĕçе хуласемпе ялсенчи шкулсем хастар хутшăнаççĕ. Паянхи кун тĕлне унăн уйрăм пайĕсене пуçтарнă. Çĕнтерӳ пирне ача-пăча пултарулăх çурчĕсенче, вăрçă темипе çыхăннă мероприятисенче курма май пулĕ. Кайран вăл Чăваш наци музейĕнче упранĕ.**

**Кĕçех Пĕтĕм Раççейри "Çĕнтерӳ сиренĕ" акци пуçланĕ. Майăн 1-мĕшĕнче Шупашкарти Студентсен скверĕнче тĕрлĕ ӳсĕмри çынсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕсемпе пĕрле сирень тĕммисем лартма палăртнă. Вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнă селекционерсен уйрăм сорчĕсене ятарласа илсе килĕç. Çак сортсене паттăрсен ячĕсене панă.**

**Çĕнтерӳ кунĕнче "Астăвăм стени" акцие хутшăнма май пур. 13 сехетре кашниех хăйĕн тăванĕн сăнӳкерчĕкне Шупашкарти пĕр урамра вырнаçтарма пултарĕ.**

**Хорсен фестивальне ирттерме палăртни те – асра юлакан пулăм. Унта пултарулăх ушкăнĕсем вăрçă вăхăтĕнчи тата ун хыççăнхи юрăсене шăрантарĕç.**

**Халыхи ăру пурнăçĕ – çителĕклĕ. Çакăншăн эпир вăрçă ветеранĕсене, тыл ĕçченĕсене тав тăватпăр.**

АНАТАЛЛА-ТĂВАЛЛА

# Маннă ял

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ
1-мĕш стр./.

Выççăлккăра лавкка, больница, шкул çукки те нимех те мар. Ватлăхра йăпанмашкăн, хăйсене пăхмашкăн тепĕр тĕпренчĕк кирлине ăша хывнă Ивановсем. Галина Маряшкина калана тăрăх, ĕçчен те тăрăшуллă ку çемье. Выльăхчĕрлĕх те тытаççĕ, улмаçырла, пахчаçимĕç çитĕнтереççĕ. Çĕнĕ пӳрт лартас ĕмĕтĕллевпе пурăнаççĕ.

### Çутă ĕмĕт татăлнă

Чи малтан Пелагея Федоровна Федорова патĕнче чарăнтăмăр. 96 çула çитнĕ Пăлаки аппа шăллĕн арăмĕпе Антонинăпа пурăнать. Тоня аппан та çулĕсем пур, вăл 82 çулта. «Инкене 15 çул пăхатăп, хам та çамрăк мар, ывăнса та çитетĕп тепĕр чухне. Мĕн тăвăн, мансăр пуçне унăн урăх никам та çук-çке. Чи çывăх çынни те пĕр эпĕ кăна юлнă. Иккĕн-иккĕнех, кичем мар», – сăмах пуçарать Антонина Григорьевна. 82-ри Тоня аппа нумай пулмасть çеç ĕнине сутса янă. Кăштăртатса çӳрекенскер сурăхсем, чăх-чĕп усрать. Пахчаçимĕçне те лартса ӳстерет. Вĕлле хурчĕсене те пĕр-ик çул каялла çеç тытма пăрахнă.

Пăлаки аппа Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă чухне 21 çулта пулнă. Шăпах качча кайса çемье çавăрмалли вăхăт. Хĕр чухне хĕрĕх теççĕ, куç хывни унăн та пулман мар. Хăрушă вăрçă вара пĕр кунра миллион-миллион çутă ĕмĕте татнă. Çав шутра – çак пĕчĕк выççăлккăра пурăнакан чипер Пăлакинне те. Арçынсем вăрçа ăсаннă май мĕнпур йывăр ĕç ялти хĕрарăмсемпе хĕр упраç çине тиеннĕ. Пăлаки те фронта пулăшас тесе çĕрнекунне пĕлмесĕр тăрăшнă. Хăйне трактор шанса парсан çав тери хĕпĕртенĕ вăл. Хурçă утпа уй-хир тăрăх хĕрача вĕçтерсе çӳренине ăмсанакансем те пулнă. «Тăхăр çул ĕçлерĕм тракториста. Чи телейлĕ те илемлĕ çулсемчĕ вĕсем. Çамрăкчĕ, вăй тапса тăратчĕ. Мĕн чухлĕ çĕр сухаламан-ши, мĕн чухлĕ тырпул акман-ши эпĕ хам ĕмĕрте», – çĕкленӳллĕн каласать Пăлаки аппа.



● ЮНКĂ ЯЛ ТĂРĂХĔН АДМИНИСТРАЦИ ĔÇЧЕНĔ ГАЛИНА МАРЯШКИНА ПЕЛАГЕЯ ФЕДОРОВĂНА ЧЫСЛАНĂ САМАНТ.

Вăрçа ăсатса янă каччăсем каялла таврăнайман. Çемье çавăрма арçын та пулман ялта. Чипер Пăлаки те качча каяймасăрах ватăлнă.

Шел те, ĕç стажĕн тăхăр çулĕ çухалнă Пелагея Федоровнăн. Çавна пула пенси укçи те ыттисенчен чылай сахалрах килет. Агрегат заводĕнче ĕçленĕ май Антонина Григорьевнăн унăн документчĕсене шыраттарма вăхăчĕ пулман, кайран кая юлнă.

Юнкă ял тăрăхĕн администраци ĕçченĕ Галина Маряшкина Пелагея Федоровнăна «1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул» медальпе чысларĕ. Тем пекех хĕпĕртерĕ, хăйне манманшăн, килсе хисеп тунăшăн савăнчĕ Пăлаки аппа. Ури ыратнипе, шыçнипе асапланать кинеми. Иртнĕ çул урама та чиперех тухса çӳренĕ-мĕн, кăçал хăйне йывăртарах туять. Ача чухнехине, кампа выляса ӳснине, мĕнпур тăванне лайăх астăвать Пелагея Федоровна. 100 çула çывхарса пыракан Пăлаки аппа халĕ те хитре сăнне çухатманни унăн сутă кăвак куçĕсенче палăрчĕ. Алăран тытса пил пачĕ ырă чунлă кинеми.



● СИРĔН ЯЛ МĔНЛЕ ПУРĂНАТЬ? СИСТЕРĔР. «ЧХ» КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ÇУЛА ТУХМА ЯЛАНАХ ХАТĔР.

### Кунта министрсем пурăнаççĕ

1988-92 çулсенче ЧР культура министрĕнче ĕçленĕ Г.М.Алексеев Коминтернра пурăнать тенине илтсен темшĕн ĕненесех килмерĕ. «Ку тĕттĕм выççăлккăра мĕн çухатнă эксминистр?» – чи малтан çапла шухăшласа илтĕм ăшăмра. Герольд Михайловичăн телейпе çиçекен сăн-питне, ăшă куллине курсан вăл çăтмах тĕнчинче пурăннине хăй калама пуçличченех ăнлантăм.

ЧР ĕç министрĕнче ĕçленĕ Крета Лазаревна Валицкая та – çак тăрăххранах. Мăн Сĕнтĕрте çуралса ӳснĕ вăл. Кайран Кăпасри шкулта вĕреннĕ. Крета Валицкаяна та вăхăтĕнче Коминтерн выççăлкки тыткăнланă. Вăл çакăнта çурт килсе туяннă. Анчах та мăшăрĕ чирлесе вилнĕ хыççăн кунта пĕччен пурăнас темен. Çуртне тем пек шел пулсан та иртнĕ çул кĕркунне тăванне сутса куçса кайнă. «Чăхсем усратчĕ Крета Лазаревна. Питĕ юрататчĕ выççăлккăна. Вăрманта уçăлса çӳреме, çырла-кăмпа пуçтарма кăмăллатчĕ», – каласа кăтартать кӳрши.

**Экс-министрсем вăрман варринчи улах кĕтесре мĕн тупнине «ЧХ» çитес номерĕсенче каласа кăтартăпăр.**

### Вăрман юнашар пулин те...

Вăрманĕ çумрах пулин те кунта пурăнакансен вутта аякран кӳрсе килме тивет. Хальхи саккунпа килĕшӳллĕн, йывăçшăн çеç мар, хăрăк-турата сĕтĕрнине курсан та штрафлаççĕ. Çĕрсе вырттăрах вăл, анчах та çынна ахаль пама шел. Малтан Тоня аппа та çунашкапа сĕтĕрнĕ-ха, халь çĕрĕк йывăçа вăрлама хăрать кинеми. «Тепĕр çул валли вутă çук пирĕн. Пĕлместĕп, мĕнле хĕл каçăпăр? Юмахри пек хальлĕхе: кахалланнипе карчăкки вилетĕп, хĕрĕ качча каятăп тесе ыраш акман пĕр çулхине. Эпир те çаплах, 96 çулти карчăкки вилетĕп тет, эпĕ унтан çамрăкрах та, ман качча каймалла пуль ĕнтĕ», – шӳтлет Тоня аппа. Герольд Алексеева Хĕрлĕ Чутайĕнчен пĕр машина юман вутти кӳрсе панă. «7 пин çурăпа туянтăм. Аптрамалла, Муркашра вутă хатĕрлеме пултаракан çын çук-ши?» – ют районтан тиесе килнинчен тĕлĕнет Герольд Михайлович.

### Салтака сĕлĕ çăлса хăварнă

Выççăлккăри чи ватă çын, Семен Васильевич Овчинников, иртнĕ çул кăна вилнĕ. Халь ку ялта чи ватти Пăлаки аппа шутланать. Чи çамрăкки – Маринăн хĕрĕ, 9 çулти Люба. 102 çула çитнĕ вăрçă ветеранне хĕрĕ Мария пăхса пурăннă. Интереслĕ шăпаллă пулнă вăл. Тыткăна лекнĕскерне нимĕçсем пĕр вĕçĕм лаша пăхтарнă. Хăйне вара йĕркеллĕ апат та çитермен. «Ку салтак çавракалансах пырать. Хăйне майлă çак вырăссем. Ниепле те парăнтарма çук вĕсене», – çапла каласа тĕлĕннĕ тет нимĕçсем. Семен Васильевич вара витере лаша сĕлли çисе пурăннă, çăварĕ типсен шыв ĕçнĕ. Хырăмĕ яланах тутă пулнă чăваш салтакĕн.

Юнкă ял тăрăхне кĕрекен Коминтернра паян 8 çын прописккăра тăрать. Çуллахи вăхăтра выççăлккă йăлтах чĕрĕлет-мĕн. Пĕр пӳрт те пушă лармасть ун чухне. Кăçал вара вăрманлă ялта 6 çын хĕл каçнă.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

ПУКАШ ПУТИШĔСЕМ

# Тихана хăтартăмăр...

Энĕш шывĕ кашни çуркунне сарăлса юхатчĕ. «Ускасси арманĕ» татăлса кайсан уйрăмах хăрушăччĕ. Ара, тăпраран купалана арман пĕви пысăк пăр катрамĕсем пырса çапнине ăçтан чăттăр?

Кӳршĕри Васса Улушĕ тăван Мĕшĕл ялĕнче темиçе лаша усратчĕ. Вăл иртен пуçласа каçченех арман пĕвинче пулăра ларатчĕ. Пĕррехинче çапла хăмламалли кĕсрине кӳлсе çитнĕ. Пулă шӳрпи пĕçерме Мельник Çтаппанăн пĕчĕк арманçă пӳртне васканă. Лешĕн сĕтел çинче аншарли кĕленчисем ларнă, ара, çăнăх авăртма кам пушă пытăр?..

Кĕсре утă-улăм сарнă пăр çине хăмласа хунине сисмен те ăшă пӳртрисем. Пăр вакланса çав вăхăтра анаталла, Пукаш – Хураньял еннелле, шума тытăннă. Çав хăрушă, чуна сисчĕвлентерекен ӳкерчĕк халĕ те куç умĕнче. Пĕрин çинче тин çут тĕнчене килнĕ шап-шурă, тимĕр-кăвак тиха ишет, çыран хĕрринче амăшĕ тулхăрса чупать.

Атăл çинче матросра çӳренĕ Эрхип Микули нумай шухăшласа тăмарĕ, çыр хĕрринчи киммине хускатса вĕçтерчĕ. Эпир те, Лисаппа Тули, Саня Витти, вăрăм вĕренпăяв илтĕмĕр те сикрĕмĕр. Тихаллă пăр патне çитсен Эрхипсен тихине çурăмĕ урлă çыхрăмăр та кимĕ çине вырнаçтартăмăр. Типпе илсе тухнăскерне амăшĕ тӳрех çитерме тытăнчĕ.

Уйăхран çав тихана Васса Улушĕ колхоз фермине парнелерĕ:

– Асăнмалăх пултăр, хăйне çăлаканĕсене савăнтарса пурăнтăрах! – терĕ леçме пырсан Улуш Леонтьев.

**А.МАКСИМОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

# Халăх уттипе

Пӳлĕм алăкĕ кăшт уçă та шăкăлшăкăл калаçни хăлхана кĕчĕ. Сывлăх сунса малалла иртрĕм, Чăрмантармарăм иккен, шыв юххи пек калаçу малалла тăсăлчĕ.

– Эсир ĕçе лайăх йĕркелеме пултарнине колхозра тăрăшнă вăхăтрах туйса илтĕмĕр, – терĕ П.Федоров.

– Халăх уттипе утмалла, унăн шухăш-кăмăлне ялан пĕлсе тăмалла, унсăрăн ĕç-пуçа малалла яраймăн, – ăнлантарчĕ Ураскилт ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Э.Козлов.

Эдуард Германович иртнĕ вăхăта пĕр самантлăха куç умне кăларчĕ. Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн тăван хуçалăхра вăй хучĕ, кайран Чăваш ялхуçалăх институчĕн студенчĕ пулса тăчĕ. Çара кайма ят тухсан икĕ çултан унăн вĕренӳрен уйрălма тиврĕ. Салтакран таврăнсан тепĕр хут вĕренĕве кӳлĕнчĕ. Дипломлă пулсан тăван кĕтесре тĕпленчĕ, «Заря» хуçалăхĕн тĕп инженерĕнче тимлеме пикенчĕ. «Молния» хуçалăхра та çак должноçпа ĕçлерĕ. Унăн тăрăшулăхне ял çыннисем асăрхарĕç, «Молния» колхоз председательне суйларĕç.

Унтанпа шыв-шур сахал мар юхрĕ. Халĕ Эдуард Козлов Ураскилт ял тăрăхĕн пуçлăхĕ. Ку ĕçре 2006 çултанпа тăрăшать. Хăйне кирек хăçан та патвар туять, нимĕнле ĕçре те ӳркенсе тăмасть, халăх хисеплет ăна.

Ураскилт çынни хуткупăса асăрхасан чăтаймарĕ, ыйтрĕ:

– Калама пĕлетĕр-и?

– Хуткупăса алла тытма хирĕç мар. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Ванеркин «Çăлкуç» фольклор ушкăнне парнеленĕскер ку, – ăнлантарчĕ Эдуард Германович.

– Питĕ аван. Апла «Çăлкуç» ушкăн лайăх кĕвĕ-çемĕ кăларакан хуткупăслă пулнăран сцена çинчен кайма та пĕлмĕ.

– Çапла, – килĕшрĕ унпа пуçлăх.

Л.Федоров пуçлăх пӳлĕмĕнчен тулли кăмăлпа тухса кайрĕ.

**Юрий КОРНИЛОВ.**
Элĕк районĕ.

КУРАВ

# Тăван кил ăшши



● А.РЫБКИН.

**Иртнĕ эрнере Чăваш патшалăх ÿнер музейĕнче Раççей тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх художникĕн, Раççей Ÿнер академийĕн член-корреспонденчĕн, Питĕр ăслăлăхпа искусство академийĕн чăн членĕн Анатолий Рыбкинăн куравĕ уçăлчĕ. Пирĕн ентеш Санкт-Петербургра ĕçлесе пурăнать, тĕнчен тĕрлĕ кĕтесне çитет. Çав вăхăтрах çуралнă яла тăтăш килсе çÿрет. "Манăн кивĕ ырă çурт" курава шăпах Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Вăрликасси, Нарат Чакки, Хуракасси тăрăхне халалланă вăл.**

Унăн картинисене урăх художниксен ĕçĕсемпе пăтраштарма май çукки тавра калаçрĕç курава килнисем. Кашни пулăма пурнăçри пекех кăтартнă. Акă ялти пÿрте хĕвел çути кĕрет. Юр кайнă хыççăн чечексем çеçкене ларнă. Панулми пиçсе çитнĕ. Ишĕлнĕ çуртсем курăнаççĕ. Шăнкăрч йăви юр çине ÿкнĕ. Çакăнтах – куçпа виçейми илем, çутçанталăкăн кашни вăхăтăн хăйнеевĕрлĕхĕ.

Йăмăкĕ Валентина пахчара япала çăвать. Чăвашлăх хăвачĕ куçа туртать. Унăн мăшăрĕ Анатолий тавралăха сăнать. Кашни ĕç чун ăшăлăхĕпе тулнă.

Анатолий Рыбкинăн амăшĕ Татьяна Арсентьевна 90-ран иртсен çут тĕнчерен уйрăлнă. Ывăлĕн картинисенче чĕрĕ пекех хĕрарăм. Пĕринче – канма выртнă, теприпче – картишне тухнă, виççĕмĕшĕнче таврари хăтлăхпа киленет вăл. Акă çÿçне çивĕтлесе пусĕ тавра çавăрнă. Чăваш хĕрарăмĕн сăнарĕ ытла та чипер, çыпăçуллă пулса тухнă. Унпа, паллах, художникăн нумай асаилĕвĕ çыхăннă. Тĕслĕхрен, пуçламăш класс вĕрентекенĕ 4 сехетре тетрадь тĕрĕслесе ларнине асăрхать ыйхăран вăраннă ывăлĕ. Вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайман ачасене Татьяна Арсентьевна киле чĕннĕ. Вĕсемпе пĕрле тĕпренчĕкĕ хăй сисмесĕрех пилĕк çулта çырма-вулама хăнăхнă.

Ашшĕн Петр Емельяновичăн сăнарĕ те çутă тĕссемпе сăрланса юлнă. Чире пула чутах сулахай урасăр юлман тăваттăри Анатолий. Ăна ашшĕ кăкăр таран çурхи шыва ана-ана кайса больницăна леçнĕ. Ун чухне арçын ачана ура çине тăратмашкăн Иван Петров хирург пулăшнă. "Вăл çутçанталăка илемлетнĕ, йывăç лартнă, çурт хăпартнă", – каласа кăтартать ашшĕ пирки Анатолий Рыбкин. Кил хуçи панулми йывăççисене сыпма пĕлнĕ. Çавăнпах çак çимĕç нумай картинăра тĕп вырăн йышăнать ахăр.

"Кăранташ татки те лÿчĕркеннĕ хут çеç – эсĕ вара мана чĕрĕ пекех ÿкернĕ. Мĕнле пултартăн?" – тĕлĕннĕччĕ пĕррехинче асатте Арсений Петрович. Вăл фронтовик, хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор, хор йĕркелÿçи, вăтăра яхăн юрă авторĕ пулнă. "Эсĕ хăвăн трофей баянупа çĕнĕ юрăсем мĕнле çыратăн тата? Пурĕ те çичĕ нота çеç вĕт", – терĕм ăна", – черетлĕ асаилĕвĕпе пайланать художник. Арсений Петрович çут тĕнчерен уйрăлсан та хор саланса кайман. Аслашшĕн ĕçне тăсакансем тĕнчипе ятсум çĕнсе илнĕ художнике саламлама килнĕ. Вырăнти артистсем те тăван кил ăшши çинченех юрларĕç.

Ача чухне велосипедпа пулла çÿрени те манăçмĕ. Пĕрре çапла çул çинче çур çĕр иртни 2 сехетре вăрмантан хир сысни сиксе тухнă. Юрать-ха çухалса кайман вăл. Арçын ача хытă кăшкăрнинчен хăраса тискер чĕрчун тарса пытаннă.

Вĕренекенсем уроксем хыççăн тарăн çырма урлă каçса пĕр кинемей патне çÿренĕ. Унăн кăмаки шăтса пĕтнине пула класри пур ачана та сĕрĕм тивни – Анатолий Рыбкинăн пурнăçĕнчи тепĕр пулăм.

Шкул хыççăн Вăрликасси каччи Сĕнтĕрвăрри училищинче сĕтел-пукан тума вĕреннĕ. Темиçе çултан тин çамрăкăн ĕмĕчĕ пурнăçланнă: Шупашкарти ÿнер училищин студенчĕ пулса тăнă вăл. Кайран çĕршыври чи сумлă аслă шкулта – Ленинградри СССР Ÿнер академийĕн И.Е.Репин ячĕллĕ живопиç, скульптура тата архитектура институтĕнче – ăсталăхне туптанă. Унтан Герцен ячĕллĕ педагогика институтĕнче ÿнерпе графика факультетĕнче ĕçлеме тытăннă.



● ÿНЕРÇĔ АМĂШĔ КАНАТЬ.

1980 çулта Олимпиадăпа çыхăннă вырăна хăтлăх кĕртме Мускава чĕнсе илнĕ ăна. Çакăн хыççăн художник пултарулăх командировкисене çÿреме пуçланă.

"Пурнăçăмра Чукотка, Çĕпĕр, Петербург, Франци, Инди, Куба, Сири, Венгри, Поморье... кăна мар, тăван ял пурришĕн те питĕ хĕпĕртетĕп. Ачаран çывăх, урăх ниçта та çук уй-хирлĕ, вăрманлă, çырмаллă, Атăллă тăрăхра, ăшă, хăтлă атте-анне килĕнче чунра лăпкă", – Сергей Журавлевăн "Чăваш Ен художникĕсем" кĕнекере палăртать Анатолий Петрович.

Кураври картинăсемпе паллаштарнă май каллех тăван тăрăх çинчен сăмах пуçарчĕ вăл. "Çуралнă çĕршыв – çветтуй вырăн. Вăл кăмăла çĕклет, вăй парса тăрать. Чикĕ леш енне кайсан тăван тăрăх тата хытăрах туртать. Питĕрпе Чăваш Республики хушшинчи 1500 çухрăма туймастăп та", – тет художник.

"Унпа çыхăну тытсах тăратпăр, апла пулин те кунта эпир курман картина нумай. Хăш-пĕр çурт ишĕлсе анма, ял таврашĕ улшăнма пултарать, анчах художникăн ĕçĕсенче йĕри-тавралăх çаплипех юлать", – теççĕ унăн ентешĕсем Розăпа Петр Ефимовсем, Елена Павлова, Лидия Ефимова. Вĕсем художник чăваш мунчине юратни çинчен каласа кăтартрĕç. Çакă унăн картинисенчен те паллă.

"Кур-ха, ÿкерчĕкри амăшĕ тăрса утас пекех. Ăна вăл çав тери хытă юрататчĕ. Анатолий Петрович чекек курсан та савăнма пĕлет. Çутçанталăка сăнама юрататать", – калаçăва тăсаççĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнче çуралнисем. Сăмах май, Ефимовсен хĕрĕ Татьяна та художник çулне суйласа илнĕ. Кураври картинăсенче ăна та тÿрех палласа илме пулать.

Художникăн ĕçĕсем урлă Чăваш Республикинче çакнашкал ялсем пуррине хамăр çĕршывра кăна мар, чикĕ леш енче те пĕлеççĕ. Анатолий Рыбкин хула, республика, тĕнче шайĕнче 150 курав йĕркеленĕ. Кирек ăçта та ăна ăшшăн йышăннине палăртса хăварас килет.

Анатолий Рыбкинăн ĕçтешĕсем, юлташĕсем, пĕлĕшĕсем тухса калаçрĕç, унăн ĕçне пысăк хак пачĕç, унпа пĕрле савăннине палăртрĕç. Унсăр пуçне чăвашсене Питĕрте ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн тав турĕç ăна.

"Ача чухне: "Сан ĕçÿсемпе куравсенче паллашма май килĕ", – тенĕ пулсан ĕненмĕттĕм. Çапах та эпĕ телейлĕ çăлтăр айĕнче çуралнă. Художник ĕçĕ – пурнăç йĕрки. Чунпа ĕçлемесен халăха килĕшекен картина çыраймăн", – пĕтĕмлетрĕ Анатолий Петрович.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăнÿкерчĕкĕсем.

КОНКУРС

# Аслă çав çулсене пуç таятпăр...

**Нина Сагайдак, Валя Котик, Павлик Морозов, Зина Портнова, Олег Кошевой, Зоя Космодемьянская... Вĕсен ячĕсем нихăçан та манăçас çук. Паттăрсем пирки çырнă кĕнекесене шкул ачисем юратса вулаççĕ. Вулаççĕ кăна мар, вĕсем пирки хайланă сăвă-калава пăхмасăр та вĕренеççĕ.**

**Юнкун Шупашкарти Л.Н.Толстой ячĕллĕ ача-пăча библиотекинче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине халалласа «Çав аслă çулсене пуç таятпăр» ятпа сусăр ачасен хушшинче республика конкурсĕ иртрĕ.**




Унта Шупашкарти ятарлă /коррекци/ пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкулти 1-12 класс вĕренекенĕсем хутшăнчĕç. Япăх куракан ачасен пултарулăхне виçĕ номинацире хакларĕç: Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пирки поэтсем хайланă сăвва пăхмасăр вуласси, асăннă темăпа çырнă илемлĕ произведение /проза/ пăхмасăр каласа кăтартасси, Çĕнтерĕве халалласа хăйсем çырнă сăвва вуласси.

Вĕрентекенсем шкул ачисенчен те ытларах хумханни сисĕнчĕ. «Поэзире мар тăк, прозăра çĕнтеретпĕрех», – хавхалантараççĕ шăпăрлансене. Вĕсем калани чăн та тÿрре тухса пычĕ. Пачах та курманскерсем вун-вун сыпăклă сăвă йĕркисене пĕр такăнмасăр шăрантараççĕ кăна. Çĕр сывăрмасăр вĕреннине пытармарĕ хăшĕ-пĕри. Куçпа курман йĕркесене астуса юлма ансат мар паллах. Анчах та çакă ачасен пултарулăхĕнче кăштах та палăрмарĕ.

Залра шăп. Чун-чĕре витĕр шăранса тухакан сăвă-калава вуланă хушăра чÿречерен çурхи çумăр хуллен шаккани çеç илтĕнсе тăчĕ. Куççуль кăлармасăр, хумханмасăр итлеме çук сусăрсем хайланă Çĕнтерÿ сăввисене. Алăран çавăтăнмасăр пĕр утăм та туcма пултарайман ачасенче мĕн чухлĕ вăй-хăват тапса тăрать. Тем тесен те хĕвел çутине, каççерен тÿпере çăлтăрсем çутатнине те курайман шăпăрлансем тĕнчене те урăхларах куçпа виçеççĕ. Вĕсен тĕнчи ырă, çутă, ăшă... Çынпа çын мĕншĕн вăрçнине те ăнланма йывăр пĕчĕк çак чунсене. Ылханлă вăрçă пирĕн çĕр çинче мĕншĕн кĕрленине вара историрен аван пĕлеççĕ. Кашни килех кĕрсе тухнă инкек. Миллион-миллион çын шăпине ĕмĕрлĕхе хуçнă. Çĕнтерĕве çывхартас тесе залра ларакан ачасен вăтă аслашшĕ-кукашшĕ те хаяр çав вăрçăра пуçĕсене хунă.

Хĕрлĕ галстук, çар тумĕ, хутран ăсталанă хĕп-хĕрлĕ гвоздикăсем Çĕнтерÿ кунĕ çывхарсах килнине систерчĕç. Хурлăхлă, çав вăхăтрах савăнăçлă юрă-кĕвĕ поэзипе проза конкурсне уяв сĕмĕ кĕртрĕ.

«Кунта хутшăнакансем пурте çĕнтерÿçĕсем», – тесе ахальтен каламарĕç пуль конкурс пуçламăшĕнче. Кашниех дипломсемпе пĕчĕк парнесене тивĕçрĕç.

**Елена АТАМАНОВА.**

Автор сăнÿкерчĕкĕ.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

## Кĕрпепе, пахчаçимĕçпе



**100-шер грамм урпа, вир, рис кĕрпи, 150 грамм кишĕр, 150 грамм хĕрлĕ кăшман, 100 грамм сухан, 70 грамм петрушка, 30 миллилитр тип çу, 1 литр шыв, тăвар кирлĕ.**

Кишĕрпе хĕрлĕ кăшмана теркăламалла. Темиçе тĕрлĕ кĕрпене çумалла. Суханпа петрушкăна вĕтетмелле. Кастрюль тĕпне хĕрлĕ кăшманпа кишĕрĕн пĕр пайне хумалла. Вир кĕрпипе витмелле. Ун çине кишĕрпе хĕрлĕ кăшман хумалла. Рис, петрушка ямалла. Çиелтен урпа кĕрпи сармалла. Тăварлă шыв, тип çу хушмалла. Пăтта 8-10 минут вĕретмелле. Унтан кастрюле 20 минутлăха алшăллипе чĕркесе лартмалла.

## Пулăпа кăмпа

**Шăмминчен тасатнă 500 грамм пулă, 2 апат кашăкĕ тип çу, пуçлă 1 сухан, 100 грамм шампиньон, тмин, тăвар, пăрăç, 1 лимон, петрушка кирлĕ.**

Сухана вĕттĕн турамалла. Кăмпана пĕрчĕлесе касмалла. Сухана тип çупа ăшаламалла, кăмпа, тăварпа пăрăç, тмин ямалла. Вĕри 1/2 стакан шыв хушса 5 минут пăшăхламалла.

Ваклану пулла тăварпа, техĕмлĕхпе пăтратмалла. Тип çу сĕрнĕ фольга çине пулăпа кăмпа хумалла, çак хутăша чĕркесе 30 минутлăха духовкăна лартмалла. Пиçнĕ пулла лимон сĕткенĕпе сирпĕтмелле, вĕтетнĕ петрушкăпа илемлетмелле.

## Шалча пăрçи паштечĕ

**Консервланă 1 банка шалча пăрçи, 300 грамм кăмпа, пуçлă 2 сухан, 1 кишĕр, укроппа петрушка, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Вĕтетнĕ кăмпапа сухана, кишĕре тип çупа ăшаламалла, тăварпа пăрăç сапмалла. Çимĕçсене блендерпа пăтратса вĕтетмелле.

## Вир пăтти

**100 грамм вир, 1 стакан шыв, 1 çĕрулми, пуçлă 1 сухан, тăвар кирлĕ.**

Вĕрекен шыва вир кĕрпи ямалла, теркăланă çĕрулми, вĕтетнĕ сухан, тăвар хушмалла. Лайăх пăтратса çулăма сÿнтермелле. Вир пăттине 20 минутлăха духовкăна лартмалла.

## Печени

**Чуста çăрма 1 стакан çăнăх, 120 грамм услам çу, 4 апат кашăкĕ сахăр кирлĕ.**

**Крем валли 50 грамм услам çу, 4 апат кашăкĕ сахăр, çăратнă 400 грамм сĕт, 150 грамм шăккалат, 30 грамм мăйăр хатĕрлемелле.**

Услам çăва тăваткалласа касмалла. Çăнăха услам çупа, сахăрпа пăтратса чуста çăрмалла. Ăна çатма тĕпне сарнă пергамент хучĕ çине хумалла, ылтăн тĕс çапиччен духовкăра пĕçермелле.

Кастрюльти сахăр, услам çу, çăратнă сĕт хутăшне вăйсăр çулăм çинче çăраличчен пĕçермелле. Сивĕнсен унпа печение витмелле, мăйăр хурса тухмалла. Çиелтен ирĕлтернĕ шăккалат сĕрмелле. Сĕтел çине лартиччен ăна тăваткалласа касмалла.

## Кăлпассипе сыр кукăлĕ

**Çÿхе 1 лаваш, 100 грамм сыр, 100 грамм кăлпасси, симĕс сухан кирлĕ.**

Кăлпассипе сыра теркăламалла. Симĕс сухана вĕттĕн турамалла. Лаваша тăваткалласа касмалла. Кашни тăваткĕтеслĕх çине кăлпасси, сыр, симĕс сухан хутăшĕ хумалла. Ăна конверт майлă чĕркемелле. Кукăльсене çатмара тип çупа ăшаламалла.

## Хăпарту

**3 çăмарта, 1 банка çăратнă сĕт, 500 грамм тăпăрч кирлĕ.**

Çăмартана пăтратса кăпăклантармалла, çăратнă сĕт, тăпăрч хушмалла. Çак хутăша услам çу сĕрнĕ çатмана ямалла. Хăпартăва духовкăра 45 минут пĕçермелле.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Тухăçлă пăрăç



Тепĕр чухне пылак пăрăç тухăçĕ савăнтармасть. Парнике ешĕл калча кăларнă пулин те чечекĕ тăкăнать. Чылай чухне вара çимĕçсем армак-чармакланаççĕ. Мĕн тумалла-ха?

Чечекĕ тăкăннин сăлтавĕ каçхине çанталăк сивĕ пулнипе /6-8 градус/, туна хăвăрт ÿснипе, сывлăш е тăпра типнипе, тымарĕсем аманнипе сыхăннă. Çавăнпах сивĕ чухне калчана витмелле, сапсах тăмалла.

Çимĕçсем çурăласси те пиçнĕ вăхăтра калчана пĕр тикĕссĕн шăварманнипе çыхăннă.

Вĕтĕ çимĕç пуласси те тĕрлĕрен сăлтавланать: кăнтăрлахи çанталăк сивĕ тăнăран, çĕр йÿçĕ пулнăран, азотлă çĕр çинче калча ытлашшипех ешернĕрен...

Çимĕçсене те вăхăтсăр татмалла мар. Чечеке ларнă хыççăн 25-30 кунран мар, 30-45 кунран çеç пуçтармалла вĕсене.

# Купăста калчи

Купăста калчине çĕр çинчех епле ÿстермелле-ха?

Малтанах парник йăсталамалла. Хĕвел ÿкекен çĕрте шăтăк чавмалла. Тĕпне кивĕ çулçă, тислĕк хумалла, вĕри шыв сапмалла. Тăпрана каяллă тултарнă хыççăн çиеле кĕл хумалла. Парник айккинчи тăпра ан ишĕлтĕр тесен хăма çапмалла. Вăл вăтамран 15 сантиметр тарăнăш пулсан та çитет. Çиелтен кантăкпа витмелле.

Купăста вăррине акиччен 15 минутлăха 45-50 градус вĕри шыва чикмелле. Унтан 1 минут сивĕ шывра тытмалла. 12 сехетлĕхе техĕмлĕ шыва /1 литр шыва 1 чей кашăкĕ нитрофоска/ ямалла. Тăрă шывпа çуса тасатнă хыççăн вăрра 1 талăклăха сивĕтмĕше хумалла. Кун пек туни вăрлăха хăвăртрах шăтма тата сивве хăнăхма пулăшать.

Парник туни эрне иртсен унта вăрлăха акма юрать. Шăтнă хыççăн эрнерен купăстана калчине апатлантармалла: 1 литр шыва 2 грамм аммиак селитри, 4 грамм фосфат, 1 грамм кали ямалла. Лайăх тымарлантăр тесен купăстана ăшă шывпа шăвармалла, çиелтен тăпра сапмалла. Калчана витнĕ кантăка ăшă çанталăкра çеç уçмалла.



# Кавăн ÿстеретпĕр



Кавăн акнă чухне чи малтан ку çимĕç ăшша юратнине асра тытмалла. Шыв хĕрринче аксан пысăк тухăçпа савăнтармĕ – кунта ăна сивĕ пулать. Компост çинче вăл хăйне питех те лайăх туйĕ. Тăпра айне тислĕк хурса аксан та аван пулмалла.

Час-часах кавăн аврăра каять, йышлă тĕвĕленет. Кун пек чухне пĕтĕм кавăн ÿссе-пиçсе çитеймест. Çавăнпах тĕп калча ултă тăмĕш çулçине кăларсан унăн пуçне татмалла. Туратсем çинче тăватă кавăнран ытла хăвармасан та юрать. Шучĕ мĕн чухлĕ сахалрах – çимĕç çавăн чухлĕ шултăрарах ÿсет. Хушăран хĕвел ÿктĕр тесен ытлашши çулçăсене те иртмелле.

# Курăк пыйтинчен хăтăлма

Хурлăхана пыйтă тапăнни чылай пахчаçа канăçсăрлантарать. Унпа кĕрешмелли чи ансат мел – туратсене супăнь шывĕпе сирпĕтмелле. Енчен те хими япалисем усă курма шут тытрăр тăк, ку ĕçе çырла чечеке лариччен пурнăçламалла. Çавăн пекех йÿçĕ курăк /сăмахран, эрĕм е сухан хуппи/ шывĕпе те усă курма пулать.

ЧŸРЕЧЕ АНИНЧЕ

# Чечексене апатлантарма...



Чечек лавккинчи сутуçă пĕррехинче янтарь йÿçекне туянма сĕнчĕ. Вăл ÿсен-тăрана ешерме çав тери лайăх пулăшать иккен, виçипе йăнăшасран та хăрамалла мар.

1 грамм янтарь çăнăхне 5 литр шыва ярса унпа килти мĕнпур чечеке шăвартăм, сирпĕтрĕм. Чечек-курăк эрнерен курăнмаллах ÿсрĕ. Маранта йышшисене кĕрекеннисем çĕнĕ çулçăпа хунав ячĕç. Бегония та çĕнĕ туратсемпе, чечекĕпе савăнтарчĕ. Аглаонеман ачисем тухрĕç. Мандарин, фикус, хлорофитум, пеперомия, алоказия, сингониум, олеандр та çулçăсем кăларса паркаланчĕç. Кун пек апатлану декабристпа укçа чечекне те, кактуссене те килĕшрĕ.

Анчах янтарь йÿçекне çулталăкра пĕрре çеç сапмалла, ытлашши юрамасть.

Йÿçек чечек-курăка ÿсме, тăпрари паха япаласене ирĕлтерме пулăшать. Кун пек шывпа сирпĕтни çанталăк улшăнăвне чирлемесĕр иртерме те май парать.

Витĕмлĕ те паха пулнăран унпа тĕрлĕ пахчаçимĕç вăррине, вăрлăхне те йĕпетеççĕ. Кун пек, паллах, тухăçлăх та ÿсет, япăх çанталăк та хăратмасть.

1 процентлă йÿçек тăвас тесен 1 грамм йÿçеке 1 литр шыва ямалла. 0,02 процентлине тума 1 процентлине 200 миллилитр илмелле те 1 литр пулмалăх шыв хушмалла. 0,05 процентли кирлĕ тĕк – 1 процентлă 500 миллилитр йÿçеке 500 миллилитр тăрă шывпа хутăштармалла.

ТĔКĔР УМĔНЧЕ

## Хăймапа



Çак маска типĕ çÿçе тутлăхлантарать тата якатать.

1 стакан хăймана 2-3 çăмарта саррипе пăтратмалла. Хутăша пуçа сĕрмелле. 10-15 минутран çÿçе ăшă шывпа çуса тасатмалла.

## Çĕрулмипе

Ку çимĕç ÿте туртăнтарать, çавна май вĕтĕ пĕркеленчĕксене пытарать.

Хуппинчен тасатнă çĕрулмие терка витĕр кăлармалла. Ăна 1 стакан сĕтпе, 1-2 апат кашăкĕ çăнăхпа пăтратмалла. Шĕвĕрех хутăша 15-20 минутлăха пите сĕрмелле. Çуса тасатнă хыççăн тутлăхлантаракан кремпа усă курмалла. Сăмах май, çĕрулми хутăшне темиçе тумлам эфир çăвĕ те яма юрать. Тĕслĕхрен, пĕтнĕк, апельсин, кĕлчечек шăршăллине суйласа илме пултаратăр.

ШУТА ИЛМЕ

## Капăрлăхсене тасатма

Капăрлăхсем çĕнĕ пек йăлтăртатчăр тесен 1 апат кашăкĕ тăвар, 1 апат кашăкĕ апат соди, 1 апат кашăкĕ савăт-сапа çумалли супăнь, 1 стакан шыв, пĕчĕк татăк алюмини фольга çеç кирлĕ.

Шыва кăштах ăшăтмалла, савăт тĕпне фольга сармалла. Тăвар, апат соди, супăнь хушмалла. Капăрлăхсене савăтри хутăшра 5-10 минут тытмалла, унтан тăрă шывпа çумалла, çемçе пусмапа сăтăрса типĕтмелле.




ЧУНРИ

# Шурă тутăрлă пике

Колхоз уйĕнчи тăйлăк-тайлăк ларакан хăмла патаккисене, хытхура пусса илнĕ анасене курсан чун ыратать. Эх, вăхăтĕнче темиçешер тонна «симĕс ылтăн» туса илекеннччĕ кунта. Еплерех илемлĕччĕ хăмла уйĕ! Çамрăк пулнă эпир, салтакран таврăннă кăна. Кĕркунне çитессе пирĕн пек кĕтекен пулнă-ши ун чухне? Авăн уйăхĕнче Шĕнерпуç ялĕ хитре хĕрсемпе тулатчĕ. Кашни киле тенĕ пекех вырнаç-таратчĕç вĕсене. Колхоз килĕшÿ туса аслă шкул студенчĕсене çулсерен хăмла, çĕрулми çинě ĕçлеме илсе килетчĕ. Ял кĕрлесе кăна тăратчĕ ун чухне. Пулать вĕт çапла. Çĕр-çĕр хĕр хушшинче мана пĕри çеç калама çук килĕшетчĕ. Пуçне шурă тутăр çыхатчĕ те вăл, хураскер, тата килĕшÿллĕ курăнатчĕ. Ытармалла мар йăл кулли паян кун та куç умĕнче. Эпĕ хама пĕр уйăх хăмла ани çинче кăна ĕçлеттерме ятарласа бригадирпа калаçса таталнăччĕ – çав хитре хĕре кашни кунах курас килнипе, ăна ирсерен сывлăх сунас килнипе. Алюш кукка тĕрлĕ сăлтав тупса хăмла татнă çĕре кăна яратчĕ мана. Машина чÿречинчен пăхса унăн правурлăхĕнчен, чупса ĕçле-нинчен тĕлĕнсе ларattăм. Йăлтах килĕ-шетчĕ унра, утти, тыткаларăшĕ... Сасси мĕне тăратчĕ! Черчен те ачашскере пĕр кашăк шывпа çătса ямаллаччĕ. Вăл вара мана, ахаль водителе, хăть куç хÿрипе пăхса илместчĕ. Ыттисем пырса çăвартан канфет та хыптаратчĕç, каçхине кинона та чĕнетчĕç. Çук, куçăм çапах ун çинче кăначчĕ. Чăтаймарăм, пĕррехинче хăть ятне ыйтса пĕлес терĕм. Çук, каламарĕ, вăтан-чăклăн кулса илчĕ те тантăшĕсен хушшин-че çухалчĕ. Çакăн хыççăн чун çунтармăш тата ытларах кăсăклантарма пуçларĕ мана.

Ĕнтĕ хирте хăмла ĕçĕ те вĕçленсе пыратчĕ. Чипер хĕрпе клубра вальс таш-ласа курасси пулмарĕ. Тухмастчĕ вăл ниçта та. Пĕр кунхине хĕрсем ман пата бинт ыйтма чупса пычĕç. Тахăшĕ аллине кастар-са янă-мĕн. Аптечкăран туртса кăларнă çĕре хайхи шурă тутăрлă пике те çитсе тăчĕ. Аллинчен юн сăрхăнать пулин те çÿхе тути йăл кулать. Çемçе те ачаш ÿтлĕскере сĕртĕнсенех ток çапнă евĕр пĕтĕм кĕлетке чĕтренсе илчĕ. Аллине шап-шурă бинтпа чĕркенĕ хыççăн: «Халь те ятна каламастăн-и?» – терĕм çăлтăр куçĕнчен пăхса. «Катя», – терĕ вăтанчăклăн кулса.

Эх, Катя, Катя! Чун çунтармăш. Ман шур тутăрлă пикесĕм. Нумайччен манаймасăр пурăнтăм сана. Катьăпа пĕрле вĕренекен хамăр ял хĕрĕсенчен адресне илсе общежитие те шыраса тупрăм. Алран-ал çавă-тăнса кинона та кайса килнĕччĕ пĕр хутчен. Хĕвел аничченех Атăл хĕрринче те уçăлса çÿренĕччĕ. Арçын чĕри епле ыратнине пĕлесчĕ сирĕн. Катя манăн савни пулма килĕшмерĕ. Шанчăкăм çапах сÿнмерĕ. Ялта пĕр кун та тăрас килмен-нипе эпĕ те Шупашкара вĕçтерсе килтĕм. Катьăшăнах, унран аякра пулас мар тесе ялхуçалăх институтне вĕренме кĕтĕм. Ан-чах та вăл манăн пулаймарĕ. Чĕрене хушаймăн теççĕ çав. Çавăн пек хитре хĕре çĕр çинче куç хываканни эпĕ кăна-и вара?

Пĕррехинче Катьăна общежити умĕнче вăрахчен кĕтсе тăтăм. Юрать, маларах асăрхама ĕлкĕртĕм, аван мар пулса ту-хатчĕ. Пĕччен марччĕ вăл. Пилеш аллей-ипе хуллен çеç утса килнине курсан пит вут пек пĕçерсе кайрĕ. Иккĕшĕ те савăнăçлăччĕ. Картлашкапа чупса анса йывăççен хушшинче çухалтăм.

Ăçта-ши халĕ манăн шур тутăрлă пи-кесĕм? Качча тухрĕ-ши, телейлĕ-ши? Ни-епле те асран кăлараймастăп Катьăна. Телейсĕр мар эпĕ. Турă çырни ман валли те тупăнчĕ. Иксĕмĕр те пĕр-пĕрне чунтан саватпăр. Хĕр, ывăл та пур манăн. Чун тĕпĕнче упранаканнине вара тем тесен те манаймастăп. Тепре кăна курасчĕ...

**ОЛЕГ А.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

АХ, АНЧАХ

# Çылăха кĕрес килмест

«Ват хĕр», – теççĕ мана çурăм хыçĕнче. Качча тухма тахçанах вăхăт çитнине хам та пĕлетĕп. Анчах кампа çемье çавăрас? Чун ăшшине кампа пайлас? Çамрăксем манпа кăсăкланма пăрахрĕç: шăнкăравламаççĕ, кафене чĕнмеççĕ, юратнине пĕлтермеççĕ. Çемьеллисем кăна айккинче йăпанăç шыранăн туйăнать. Çын курман çĕрте кăтăклама хăтланаççĕ. Арăмĕ çумĕнче лăпкă пурăнасчĕ. Телей тупнах ĕнтĕ çав арçынсем. Мĕн çитмест-ши туль-ккăш? Киле ăсатса ярасшăн тата. Чей ĕçтермелле имĕш. Кайран вырăн сарса памалла-и? Юнашар кĕрсе выр-тмалла-и? Уй, çылăха кĕрес килмест. Авланнă арçынсем те тĕрĕс пурăнни-не курас килет.

Манăн шухăшпа, çемьеллĕ çыннăн ĕç хыççăн киле васкамалла. Нумай-ăшĕ, паллах, манпа килĕшесшĕн мар. Юлташсемпе те тĕлпуласшăн, ют хĕра-рăмсене те ыталасшăн вĕсем. Унсăр пуçне арăмĕнчен, ачи-пăчинчен уйрăм шашлăка та каясшăн, мунчара та çăвăнасшăн. «Пĕрре пурăнатпăр», – теççĕ. Çапах та çынлăх йĕркине пăхăнсан çемье те саланас çук.

Чипер пĕр майран упăшки хĕр-хĕрарăма ыталаса кăна çÿрет. «Еркĕн тупнă тейĕç – ан çулăх», – асăрхатта-ратăп ăна. Вăл яланхи пекех илтмĕш тăвать. Арăмĕ юнашар утнă чухне вара никама та асăрхамасть пулмалла – чĕпĕтсе хăварсан та пĕлмĕше-курмă-ша перет. Мăшăрĕ сивĕ куçпа пăхса-ран шикленет ĕнтĕ. Арăмĕ çумĕнче – пĕр майлă, çын çинче тепĕр тĕрлĕ тытма пĕлет хăйне.

Мана курсан аслă ÿсĕмри арçынсен куçĕ йăл-ял çиçни çинчен каласа кăтартам-ха эппин. Çамрăкраххи пурне те килĕшет пуль çав. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри тивĕçлĕ канăва тухма та ĕлкĕрнĕ. Кур-ха, çÿçĕ кĕмĕлленнĕ, анчах чунĕ ватăлман. Акă иртнĕ эрнере пĕри тĕлпулăва чĕнчĕ. Юлташăн çуралнă кунне кайсан мĕншĕн калаçрăм-ши унпа? Ташша чĕнсен те – хирĕçле-мерĕм. Икĕ-виçĕ черкке эрех ĕçсен ар хăвачĕ çинчен калаçма пуçларĕ вăл. Арăмĕ мăнукĕсене пăхма урăх хулана кайнă тет. Çакăнпа усă курса хĕрсене хăнана илсе каясшăн. Тутлă эрехпе, темĕн тĕрлĕ апат-çимĕçпе илĕртет. Анчах эпĕ унăн вăлтине лекес çук. Вылянчăк шухăшлине шы-ратăрах.

Кирек ăçта кайсан та май пур таран хăвăртрах çемье çавăрмалли çинчен аса илтереççĕ. Çакна хăнăхса çитрĕм ĕнтĕ, кÿренме те пăрахрăм. «Уйрăм кил-çуртлă çынпа çеç мăшăрланăп», – чăнласа та, шÿтлесе те каларăм ĕçтешсемпе сĕтел хушшине пуçтарăн-сан. Манăн сăмахсем арăмĕпе пĕрле пурăнман арçыннăн хăлхине кĕрсе юлнă. Вăл та 50 урлă каçнă. Тепĕр кун хайхискер мана коридорта тытса чарчĕ. Качча тухма ыйтать... «Общежитире пÿлĕм пур. Унта иксĕмĕре валли вырăн çитĕ. Пирĕн йăхра хĕрарăм арçын сăмахĕнчен иртмест. Санăн та çак йĕркене пăхăнас пулать», – асăр-хаттарчĕ вăл. Шухăшлама темиçе кун пачĕ. Пĕр чĕптĕм те юратман çынпа пĕрлешме пулать-и вара? Манăн кĕç-вĕç пенсие тухаканнисемпе мăшăрла-нас килмест. Ача-пăча çуратасчĕ, упăшкапа пĕрле тĕпренчĕксене ура çине тăратасчĕ, мăнуксене пăхса пу-лăшасчĕ... Çук, ĕçтешпе пĕр пÿлĕмре выртса-тăма килĕшмерĕм.

Пурпĕрех шанăçа çухатмастăп. Паян мар тăк ыран чуна çывăх çынна тĕл пулăпах.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ХУСАХ ПУРНĂÇĔ

# Пĕрне юратать, теприне шырать

Ĕçри телефон шăнкăртатрĕ. Çепĕç сасă малтанах чăрман-тарнăшăн каçару ыйтрĕ, хăй кирлĕ вырăна лекнине ыйтса ĕненчĕ те мĕн çăмăлпа иккен-не пĕлтерчĕ. 37 çула кайнăскер хаçат урлă хĕрсемпе туслашас-шăн иккен.

– 25-33 çулсенчи хĕр-хĕра-рăмпа паллашасчĕ. Ача пурри чăрмав мар. Ватă аннемпе пу-рăнатăп. Кил-çуртăмăр çирĕп, хăтлă, – терĕ Сантăр çепĕççĕн.

Калаçуран вăл эрех ĕçменни, чĕлĕм туртманни палăрчĕ.

– Хальччен çемьеленме май килмерĕ-и?

– Вăтанчăкрах-тăр, хĕрсене çавăнпах çавăраймарăм та, – çаплипех лăпкăн та сăпайлăн хуравлать авланас шутлăскер.

– Хам та качча кайман-ха, – шÿтлес кăмăла пытараймарăм. – Тен, шăпа...

Каç кÿлĕм пÿлĕмри телефон тепĕр хутчен шăнкăртатрĕ.

– Ку каллех эпĕ-ха. Сирĕн ятăра та ыйтма маннă, – илтĕ-нет паллана сасă. – Ыран Шупашкара пымалла манăн. Тен, тĕлпулăпăр?

– Пушă вăхăт тупăйăп-ши? – иккĕлентĕм. Çапах шăнкăравла-ма ыйтрăм.

Çапла тепĕр кун Сантăр чăннипех «тупăнчĕ».

Пичет çуртĕнчен аякках мар вырнаçнă суту-илÿ центрĕ çывă-хĕнче курнăçма калаçса татăл-нăран ĕçрен тухсанах ун еннел-ле уттартăм. Ак тамаша! Мĕскер куратăп эпĕ? Мана хирĕç кĕрнеклĕ, çÿллĕ каччă утать. Аллинче – пысăк кĕлчечек çыххи! Нивушлĕ Сантăр? Çакăн пек каччă та пĕччен пулаять-и? Хам савнине пăрахсах Муркаша качча кайăп-ши? Пуçра çĕр тĕрлĕ шухăш. Чĕрем те кăлт! тапма тытăнчĕ. Арçын вара çывхарса та çывхарса пырать. Ура такăнать. «Эсир ман патă-ма-и?» ыйтасшăнччĕ тĕлме тĕл пулсан, анчах çăвара уçса та ĕлкĕреймерĕм, каччă ман çум-ран иртсе малалла утрĕ.

Пичет çурчĕ умĕнче курнă арçын хыççăн Сантăр пĕчĕк те имшер пек туйăнчĕ. Ялтан кил-ни те тÿрех палăрать: сăн-питрен, тумтиртен.

– Сантăр, сăмахăма тытас тесе курнăçрăм санпала. Пал-лах, эпир пĕр-пĕриншĕн çуралнă çынсем мар. Сана ялта пурăнма килĕшекен мăшăр кирлĕ. Эпĕ хулара тĕпленнĕ. Çавăнпах иксĕмĕр тĕлпулни ниме те пĕлтерменнине хăв та ăнлана-тăн-тăр, – пуçларăм калаçăва.

– Çапла. Çапах тĕлпулма килĕшнишĕн тавах. Чунăма сире те пулин уçас тетĕп. Тен, канаш паратăр, – ыйтуллăн пуçларĕ калаçăва.

Çук, айван та мемме мар вăл. Пĕчĕк пулин те пултарулла та маттурри куç кĕрет. Сăпайлă кăна. Çавăнпах вăхăтра авланма ĕлкĕреймен те. Сантăр каласа кăтартнă тăрăх, савнийĕ те пулнă-ха унăн. Анчах ăна урăххи вăрласа кĕрсе арăм тунă.

Суеçтерес, улталас, пысăк-латса е пĕчĕклетсе калас йăли çуккине асăрхарăм. Шанса, чун-не уçса калаçрĕ каччă. Сăмах май, унпа тем пирки те пупле-ме май пуррине те сăнарăм. Çанталăк-и, кулленхи лару-тăру-и, пахчари ĕçсем-и, истори-и – пурин пирки те сăмах-юмах килет. Унашкаллипе темĕнле хĕрарăм та пĕр чĕлхе тупмалла пек. Ялта пурăнать пулин те ăслă-тăнлă та анлă тавраку-рăмлă вăл. Шел, аслă пĕлÿ илме тÿр килмен. Кĕнеке-хаçат тавраше вуланине те пытар-марĕ.

– Каçсерен тепĕр чухне те-левизор пăхас килмест те кĕне-ке вулатăп.

– Чăвашлине-и?

– Тĕрлĕрен пулать. Килте кĕнеке чылай. Александр Арте-мьевăн «Салампине» пуринчен ытла килĕштеретĕп. Темиçе хут-чен те вуланă ăна. Нумаях пулмасть Константин Симоно-вăн «Живые и мертвые» роман-не тепĕр хутчен пăхса тухрăм, – тет уçăлма тухнă тусăм.

Акă ăçта иккен йĕкĕтĕн чун пуянлăхĕпе черченлĕхĕн çăлкуçĕ. Кĕнеке тытакан çамрăксем паян сахалланса пыраççĕ. Сантăра вара ырламалла çеç. Пушшех те арçынсем Салампи юратăвне чунĕ витĕр кăларнине хальччен илтменчĕ. Пĕртен-пĕр çакăншă-нах тин паллашнă йĕкĕте хисеп-лерĕм те.

– Аннÿ кин килессе кĕтет пулĕ-ха?

– Куллен калать кун пирки. Ывăнтарсах çитерчĕ ĕнтĕ.

– Ялта хĕр çук-им тата? Мĕншĕн пĕрне çавăрмастăн?

– Тĕрĕссипе, пур-ха пĕри. Питĕ килĕштеретĕп ăна. Анчах темĕн пулчĕ. Калаçмасть. Кÿрен-тернине те астумастăп. Çамрăк пулин те икĕ ачаллă вăл. Пĕрле те пурăнса пăхрăмăр ĕнтĕ. Ачи-сене те çав тери юрататăп. Аннем те вĕсене хапăлласах йышăнать. Анчах темшĕн кутăн-лашать. Çирĕп те хаяр кăмăллă-ха вăл, нимĕн те тăваймăн. Тепĕр чухне сăмахĕсене те суй-ласа калаçмасть. Çапах чĕреме çунтарать. Пĕрлех пулас килет те, тем ăнмасть...

Сирĕн пата та аптăранă енне шăнкăравларăм. Тен, паллаша-кан пулĕ те ăна манăп тетĕп. Çук пуль, ăнах саватăп. Ун çинчен пĕр самантлăха та ма-наймастăп. Çамрăкрах чухне юрату пуррине ĕненеттĕм-ха, анчах хам нихăçан та унăн чури пулмăп теттĕм. Акă халĕ юрат-рăм, ку туйăмпа нимĕн те тăваймастăп...

Çыратăп – хуравламасть, шăн-кăравлатăп – тытмасть. Номерне улăштарассипе те хăратать. Ĕçне каяс – эпĕ пырсан туха таратăп тет. Килне пыни те усси çук – уçмасть, тухмасть. Юнашар ларса чунăма уçас килет те... Çитмест халĕ вăл мана...

– Эсĕ курнăçма май шыраса тупах. Юрататăн пулсан хăв енне çавăрах. Урăххипе паллашни хă-тармĕ. Пушшех те, санăн чĕрÿнте теприн валли вырăн çук халĕ. Урăххипе паллаша шухăш тыт-нине те ан систер. Пушшех кÿренĕ. Каçармĕ.

Çапла пĕлтерĕве памалла мар калаçса килĕшрĕмĕр те уйрăлтăмăр.

Тепĕр чухне чун ыратăвне ирттерме ют çын кирлĕ. Итле-кенни. Темĕнле чаплă канаш та ан патăр вăл – мĕн каланине çеç тĕпĕ-йĕрĕпе итлетĕр. Вара чунра çăмăлланать. Эпĕ те Сан-тăршăн хăйне евĕр психолог пулса тăтăм-тăр. Йывăр вăхăтра калаçма кирлĕ çын. Журналис-тăн темĕнле професси те алла илме тивет çав.

Сантăр халĕ кун сиктерсе тенĕ пек шăнкăравлать. Пурнă-çĕнчи ăннă е ăнман утăмĕсем пирки сăмахлать. Манпа калаç-сан ăшĕнчи пушарĕ лăпланнине систерет. Чун-чĕререн ырă су-натăп ăна. Пĕрне юратнă вăхăт-рах теприне шыранине çеç ăнланаймастăп...

**Яна КĂТРИ.**

ФЕСТИВАЛЬ

# Халăхсен туслăхĕ – кĕнеке урлă

Республикăра регионсен хушшинчи наци кĕнекин фестивальне ирттересси йăлана кĕнĕ. Кăçал вăл 13-мĕш хутчен иртет, "Кĕнеке урлă – халăхсен туслăхĕ патне" ятпа. Шупашкарта, Улатăрта, Чĕмпĕрте, Элĕк, Вăрнар, Пăрачкав тата Муркаш районĕсенче фестиваль мероприятийĕсем ака уйăхĕн 25-мĕшĕччченех пырĕç. Чăваш наци библиотекинче çак кунсенче çыравçăсемпе тĕлпулусем йĕркелеççĕ, Итали кĕнекин, китай поэзийĕн, экологипе тата наукăпа, православипе çыхăннă литература кунĕсене ирттереççĕ.

Фестиваль акан 15-мĕшĕнче Наци библиотекинче уçăлчĕ. Хăйне евĕр курав йĕркеленинчен пуçланчĕ вăл. Кунта Раççей патшалăх Искусствăсен библиотекин /Мускав/ коллекцийĕпе пуянлатнă "XVIII-XIX ĕмĕрсенчи графикăри Раççей халăх костюмĕ" курав уçăлчĕ. Раççей тата ют çĕршыв ӳнерçисен гравюрисемпе, литографийĕсемпе, ӳкерчĕкĕсемпе паллашма май пур куравра. Тĕрлĕ халăхăн йăли-йĕрки, çи-пуçĕ çинчен каласа кăтартакан вун-вун кĕнекене те тишкерме май пур. Тĕрлĕ наципе пуян Раççей империйĕн историйĕпе кăсăкланакансемшĕн чухах ку.

**Татьяна НАУМОВА.**

АСТĂВĂМ

# «Çил пек васкакан Илпек»

**Чăваш халăх çыравçи Илпек Микулайĕ çуралнăранпа 100 çул çитет. Ăна халалланă литература каçĕнче юлташĕсем, пĕлĕшĕсем, вĕренекенĕсем тухса калаçрĕç.**

Çыравçă Шăмăршă районĕнчи Виçпӳрт Шăмăршăра хресчен çемйинче çут тĕнчене килнĕ. 6 çулта ашшĕсĕр юлнăскер йывăр ĕçре пиçĕхсе çитĕннĕ. Сакăр класлă шкул хыççăн Патăрьелти педагогика училищинче пĕлĕвне тарăнлатнă. Унтан И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренме кĕнĕ. 10 çул ытла хĕсметре тăнă вăл. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче дивизи хаçачĕн редакторĕ пулнă. Çартан майор званипе таврăнсан Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕнче 10 çул ытла ĕçленĕ. Унăн "Хура çăкăр" романне вырăс, эстон, пăлхар чĕлхисене куçарнă. Ăна вулакансем çавнашкалах "Куçукпа чĕрĕп", "Эпир – совет салтакĕсем", "Кăмпара", "Сурпан", "Вăрçăпа çĕнтерӳ"... кĕнекесем урлă пĕлеççĕ.

Илпек Микулайĕ Петĕр Хусанкай, Леонид Агаков, Куçма Пайраш, Алексей Талвир, Хветĕр Уяр пултарулăхĕ çинчен статьясем çырнă. Вырăс, ют чĕлхе литературин классикĕсен ĕçĕсене чăвашла куçарнă вăл. Çыравçă Хĕрлĕ Çăлтăр, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсене тивĕçнĕ.

Шупашкарта вăл пурăннă çурт çине асăну хăми çакнă. Республикăн тĕп хулинче ун ячĕллĕ урам пур.

Литература каçне пуçтарăннисем унпа çыхăннă самантсене аса илчĕç. Любовь Федорова сăвăç, вĕрентекен Илпек Микулайĕпе Чăваш кĕнеке издательствинче тĕл пулнă, хăйĕн сăввисене вуласа пăхма ыйтнă.

Чăваш халăх сăвăçи Порфирий Афанасьев Илпек Микулайĕ çамрăксене хисепленине, вĕрентсе пынине палăртрĕ. "Вăл çав тери ăслăччĕ, ĕçченччĕ, лара-тăра пĕлместчĕ, "Çил пек васкакан Илпек", – теттĕм ăна. Паллă артистран та хитререх калаçатчĕ. "Выçă мар-и? Укçа пур-и?" – кăсăклансах тăратчĕ. Киле чей ĕçме те илсе кайнă", – каласа кăтартать Порфирий Васильевич.

Виталий Станьял ăсчах Илпек Микулайĕ чĕлхепе тирпейлĕ усă курма вĕрентнине аса илчĕ. Çамрăксем çыравçăпа та, унăн мăшăрĕпе те туслашнă.

Пĕрре октябрь уявĕ тĕлне Илпек Микулайне "Коммунизм ялавĕ" /хальхи "Хыпар"/ хаçат валли статья хатĕрлеме ыйтнă. Ун чухнехи хаçат ĕçченĕ Виталий Станьял алçырăвĕ патне килне вĕçтернĕ. Анчах вăл çырма пуçламан та иккен. Хăнана сĕтел хушшине лартса Илпек Микулайĕ хăйĕн пӳлĕмне питĕрĕннĕ те ĕçе пуçăннă. "Уявсен уявĕ" статья алçырăвне халĕ те упрать Виталий Петрович. Унта çакнашкал йĕркесем пур: "Пирĕн çĕршывра нихăçан та хĕвел анмасть. Аслă вăл! Кай эс Таллина – эстонсен шĕкĕр хулине. Унта хĕвел анса çитиччен Инçетри Хĕвелтухăçĕнче хĕвел хĕрелсе тухать. Кай эс çурçĕрти Норильска, унта ман йăмăк-шăллăм пурăнать, кĕрсе салам кала. Паян унта сана хĕл сивви кĕтсе илчĕ пулсан хăватлă самолет çине лар та çур талăк хушшинче кăнтăрти Душанбене çит, каллех пирĕн тăвансене çитсе кур. Унта шăрăх пулсан Памир хĕрринчи кӳлĕре шыва кĕр.

Пур çĕрте те эс – кĕтнĕ хăна. Совет çынни – тăван çын. Хамăр çын. Çавăн пек аслă çав пирĕн çĕршыв".

Илпек Микулайĕ хăйне нихăçан та мăнна хуман, çамрăксемпе "шăллăм" тесе калаçнă.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

**Иван ТЕНЮШЕВ**

# Сарă конверт

**/Малалли. Пуçламăшĕ 12-13-мĕш номерсенче/.**

Çынсем хӳтлĕхелле тарса пытанма ĕлкĕрнĕрен аманаканни-вилекенни пулмарĕ, анчах пĕр арçынна тытамак тытса пăрахрĕ, вăл тăнне çухатса кайса ӳкрĕ. Кĕçех çăварĕнчен кăпăк персе тухрĕ, никам тытса чараймасла тапкаланма тытăнчĕ. Йĕкĕр çивĕтлĕ хĕр-медсестра арçынна кача пӳрнинчен ярса тытрĕ, ăна хытă хĕстерчĕ.

– Мĕн юпа пек хытса тăратăн? Абсапс унăн... Пулăш госпитале çавăрса кĕме! – пуç сулчĕ хĕр аслă матроса арçын тăна кĕрсенех.

Тытамак тытнине госпитале вырнаçтарнă хыççăн мăшăр çивĕтлипе сенкер куçли урама тирпей кӳрес ĕçе малалла тăсрĕç.

– Мĕн вăл абсапс? – хăйса ыйтрĕ аслă матрос хĕртен. Тăпăл-тăпăл шăм-шаклă, шуранка сăнлă хĕр ăна куçран тĕллесе пăхрĕ, унтан куланçи турĕ те кăмăллă сасăпа ăнлантарса пачĕ:

– Абсапс – тытамак тытнăран вăхăтлăха тăн çухатни. Малти линире контузи пулнă ăна, çавăнтанпа асапланать. Шанатăп: эсир вăл чирпе аптракан йышши мар...

Урăх калаçма май килмерĕ аслă матросăн çав хĕрпе. Чупса килнĕ шур халатлă сестра наçилкка йăтакан хĕре госпитале чĕнсе кайрĕ.

Тупа ту пĕр-пĕринпе нихçан та тĕл пулаймаççĕ, çынпа çын тĕл пулма пултараççех иккен. Тухтăр хушнипе çывăхри аптекăна кайма тухнăччĕ ун чухне аслă матрос. Юрă ĕнĕрлекен пĕр хĕр парапет çумĕнчен хăпрĕ те ун çулне картласа хучĕ.

– Палланă хĕре сăмах хушмасăр иртсе кайма юрать-и вара? – юрланă сасăпа ӳпкелесе чарчĕ хайхискер. – Тăçта пит васкатăр – адмирал хăй чĕнтермерĕ-и?

Вăт ме сана: ун умĕнче мăшăр çивĕт тăра парать. Малтан курнă чухнехи пекех илемлĕ, сасси янăравлă. Ăшă та усă кăмăллă пулма кирлĕ. Аслă матрос медсестрана хĕпĕртесех алă тăсса пачĕ. Хăй çумне чăмăртама та хатĕрччĕ – хĕр хăвăрт каялла чакса тăчĕ.

– Мана агрипния тертлентерме пуçларĕ... сире урам тасатнă чух курнăранпа... Мĕнпе пулăшнă пулăттăр?

– Ăнкараймастăп ку диагноза. Çавăнпа хăш рецептпа сиплемеллине те тавçăраймастăп.

– Мĕн ăнкармалли: ыйхă килменнипе тертленетĕп. Сире тĕл пулнăранпа çывăрайми пултăм...

– Шӳтлетĕр ĕнтĕ, – ĕненменçи пулчĕ хĕр. – Хăвăр моряк пулнăран кăна кӳренместĕп...

Кирек хăш шӳтре те тĕрĕслĕх пĕрчи пур...

Тухтăр хушнине пурнăçлама васканăран аслă матросăн хальхинче те хĕрпе вăрах калаçса тăма май килмерĕ. Моряксем дисциплинăна нимрен мала хураççĕ. Йĕкĕт хăйне килĕшекен хĕрпе тĕл пулнине шута илмĕç. Çапах медсестран ятнешывне, ăçта пурăннине ыйтса пĕлчĕ, тепре ăçта тата хăçан тĕл пуласси пирки калаçса татăлчĕ. Хĕр тархаслаттарма шухăшламарĕ. Хăйĕн координачĕсене хут çинех çырса пачĕ.

– Пĕр Анаткас йĕкĕчĕ – пирĕн командир – госпитальте манпа пĕрле сипленет!

Аслă матросăн çак сăмахĕсем мĕн пĕлтерни хĕрĕн пуç тӳпине çитеймерĕ.

– Юрă ĕнĕрлесе çӳрекен хĕре ăçта та пулин тĕл пулсан – ку вăл эпĕ тесе шухăшла... – ăшă кулă çути ӳкерчĕ хĕр шуранка пичĕ çине. – Çакăнтах, парапет çумĕнчех курнă-çăпăр...

Парапет çумĕнчи ырă вырăна хĕр калаçса татăлнă вăхăта пычĕ. Аслă матрос ăна кĕтсе тăрать иккен. Вăл хĕре хутпа чĕркенĕ кучченеç тыттарчĕ.

Медсестра морякран кучченеçе пĕр турткаланмасăр йышăнчĕ.

– Пысăк тав! – шăлĕсене кăтартрĕ медсестра.

– Лайăх хĕр тупнă эсĕ. Анчах асăрхаман-и: ун ури вăрăм тунаннинчен те çинçерех... тăрăхларĕ кайран Мирун Пожеданов асла матросран. Икĕ çивĕтлĕ хĕр чăваш тата Анаткасран пулнине пĕлсен унашкал шӳтшĕн ӳкĕнчĕ.

Тепĕр кун, май уявĕ çитсен, Марье Хадарова чунне çывăх тантăшĕ Серафима Закускина патне кайма шухăшларĕ. Уяв уявах, мĕн тесен те ăна хăв хисеплекен çынпа ирттерме лайăх. Аслă матрос урлă Мирун ярса панă консерва банкине тата çур буханкăна яхăн çăкăра марльăпа тирпейлĕн чĕркерĕ, çак пуянлăха усă курма пăрахнă противогаз сумкине хурса ир-ирех çула тухрĕ.

Çапла, сумкăна мĕн хуни пысăк пуянлăх, хаклă кучченеç пулма пăрахман-ха. Чăн ĕнтĕ, 1943 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче Ленинград çыннисем тем тери ырă хыпар пĕлчĕç: çĕрле пирĕн çарсем тăшман оборонине татнă, Тăван çĕршывпа çыхăнма çул уçса панă. Хула çăмăлраххăн сывласа ячĕ, анчах терт-нуша пĕтмерĕ-ха. Оборонăна татни блокадăна пĕтерсе хуни мар çав. Чăн ĕнтĕ, халĕ урамĕсемпе трамвайсем çӳреме пуçларĕç.

Пурăнмалли çуртсенче электроçутă мĕлтлетме тытăнчĕ. Стенасем çинче театрсемпе кино афишисене курма пулать. Тепĕр ӳкерчĕк куçран çухалчĕ: выçăран шыçăнса тăртаннă çынсем Нева проспектĕнче хĕвел енче хăйăр ещĕкĕсем çинче ăшăнса ларма пăрахрĕç. Вăрçă хула сăн-сăпатне те, çынсен пурнăç йĕркине те тĕпрен улăштарчĕ. Нумайăшĕ хăйсен ирĕкĕпе, вăрçă нуши хистенипе хресчен пекех çĕр ĕçченĕсем пулса тăчĕç. Хула варринчех çĕрулми, купăста, кишĕр йăранĕсене курма пулать. Хула çынни кашни пушă лаптăкпа усă курма тăрăшать.

Сăн кĕме пуçланă хĕрарăмсем пасара серте, редиска, сельдерей илсе тухнă та ĕнтĕ. Вĕсене çăкăрпа ылмаштарса илме пулать. Грамм пуçне грамм, кĕрепенкĕ пуçне кĕрепенкĕ. Паллах, танлаштарулла виçепе. Калăпăр, 50 грамм çăкăршăн 100 грамм редиска. Пахчаçимĕç усси пысăк пулчĕ: цингана çĕнтерме пулăшрĕ.

Кăçалхи çуркунне пĕлтĕрхи пек мар – ăшăрах, çутăрах, тараватлăрах. Çапах пит хĕпĕртейместĕн: тăшман çывăхрах, снаряд хыççăн снаряд вăркăнтарать. Е трамвай линийĕ арканать, е электроçутă сӳнет, кĕç-вĕç килсĕр-çуртсăр тăратса хăварма та пултарать. Ленинград çыннисем ку çуркунне пурпĕр хаватерĕсене таврăнма пуçларĕç.

Пасара кĕнĕ çĕрте темиçе карчăк уй чечекĕсем сутать. Марье типсе тĕпренме пуçланă çур буханкăран пĕчĕкçĕ татăк касса илчĕ. Вăл çăкăр каснине карчăксем тĕмсĕлсе пăхса тăчĕç: кама лекĕ-ши?

**/Малалли пулать/.**

ИРТНИНЕ АСА ИЛСЕ

## Блокада трамвайĕ

**1941 çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче блокадăри Ленинградра, пĕр вăхăт чарăннă хыççăн, трамвай çĕнĕрен çӳреме пуçланă.**

*1941 çулхи раштав уйăхĕ... Ленинград. Блокада. Кĕтмен çĕртен электроэнерги пĕтнĕ, трамвайсем урамсенчех чарăна-чарăна ларнă. Хула историйĕнче кун пекки пулман-ха...*

*Анчах та тăшман ункине юлнă Ленинград парăнман. Кĕрешнĕ. 1942 çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче трамвай каллех çула тухнă: 5 маршрутпа 116 пуйăс. Хăрушă кунсене чăтса ирттерекен çынсемшĕн ку питех те пĕлтерĕшлĕ пулнă – апла, хула пурăнать...*

*Санкт-Петербургра блокада трамвайĕн палăкĕ пур. Киров районĕн трампаркĕ умĕнче вырнаçтарнă ăна. 12-мĕш номер – ăнсăртран мар. Ку маршрут Петроградран Охта еннелле çул тытнă. 1941 çулта çак проспектпа иртекен трамвайсен мал енче пулеметсем вырнаçтарнă. Юлашки чарăнура вара кондуктор хыттăн пĕлтернĕ: "Пурте тухатпăр! Малта – фронт!"*

*Санкт-Петербургра ырă çак йăлана сыхласа хăварнă – ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче блокада трамвайĕ хула тăрăх çула тухать. Ăна юсаса çĕнетнĕ, анчах та вăл вăрçă вăхăтĕнчи пекех. Унпа кăмăл пуррисем пурте ярăнма пултараççĕ.*





# Татьяна Окуневская. Юмах вĕçĕ...



*“Пурăннă тăк, Татьяна Окуневская актриса çак кунсенче 90 тултармаллаччĕ. Татьяна Кирилловна, тĕрĕссипе, çак çула “виçсе” те пăхнă. “Эсир мана темĕнле ыйту та паратăр, эпĕ вара кĕçех 90 çул тултаратăп вĕт”, – тенĕ хĕрарăм хăйĕн юлашки кунĕ умĕн шăпах корреспондентпа тĕл пулнă май.*

*Çамрăксемшĕн паян Окуневская хушамат пĕлтерĕшлех мар. 30-40-мĕш çулсенчи куракан вара актрисăна “Пышка”, “Горячие денечки”, “Ночи над Белградом” фильмсенчен пĕлет. Унсăр пуçне – иртнĕ ĕмĕрти чаплă арçынсен ячĕсем урлă та. Вĕсен хушшинче – Константин Симонов, Югослави маршалĕ Иосип Броз Тито...*

### Пĕрремĕш тĕлпулу

1947 çулхи çу уйăхĕ. Ленин Комсомолĕн ячĕллĕ театрта “Сирано де Бержерак” пырать. Зал – лăк тулли. Яланхи пекех, чаршав хупăнас умĕн куракан ура çине тăрса алă çупать. Тĕп рольсене калăпланă Иван Берсеневпа Татьяна Окуневская куракана тав туса пуç таяççĕ. Кĕтмен çĕртен зал саманалăха шăпланать: Окуневская ури умне 200 хура кĕлчечек вырнаçтарнă карçинкка пырса лартаççĕ. Суперчаплă “Ленком” та кун пеккине курман...

Актриса гримеркăра чечексен хушшинче пĕчĕк çыру тупать. “Чечексене эпĕ татман, анчах та çав тĕмĕсенченех – темиçе сехет каялла... Эпĕ вĕçĕмсĕр сирĕн çинчен шухăшлатăп, эсир те мана чĕрĕртен пуçĕпех кăларса пăрахма пултараймастăр”. Ку – Титоран. Пулма пултарать-и вара – çавăн пек арçынна манма? Актриса та ăна пĕр самантлăха та асĕнчен кăларайман...

Югослави ертÿçипе Татьяна Кирилловна 1946 çулта паллашнă – çĕршыва актриса хăй ÿкерĕннĕ фильмсемпе гастроле кайнă. Югославсем ăна питĕ ăшшăн йышăннă. Вĕсене уйрăмах “Ночь над Белградом” килĕшнĕ. Темиçе кунран актрисăна хула тулашĕнчи хăйĕн резиденцине Тито маршал чĕннĕ. Машина хĕрарăма король керменĕн алăкĕ умнех илсе çитернĕ – Тито халĕ унта пурăннă. Актриса тĕлпулăва çапла аса илнĕ. “Пĕчĕк хапха. Ун хыçĕнче – маршал. Вăл çар тумĕпе мар. Аллинче – пахча хаччи тата тин кăна каснă хура кĕлчечек çыххи. Ури çумĕнче – манран куçне илмен овчарка. “Вăт халĕ шăпах эсир ман çинчен мĕн шухăшланине тĕрĕслетпĕр: япăх тăк Рекс сире ман умрах туртса çурать”. Маршал хаваслă. Эпир кулатпăр. “Эсир ман пирки мĕн шухăшланине палăртма пултаратăр-и тата Рекс?” – “Паллах. Куратăр-и: сирĕн çинчен куçне те илмест...”

Совет киноçăлтăрĕ паллă маршалпа тепĕр хут Тито пирĕн çĕршыва официаллă визитпа килсен Мускавра тĕл пулнă. Çак ятпа “Метропольте” йĕркеленĕ банкетра арçын хĕрарăма ташша чĕнсе кăларнă. “Тинех эсир манăн ытамра, – пăшăлтатнă Тито. – Сире текех кураймасран хăранăччĕ. Эсир ăçтине манăн разведка та калаймарĕ. Тархасшăн, кулма ан пăрахăр, çав вăхăтрах итлĕр мана. Эпĕ сирĕнсĕр сывлама та, пурăнма та пултараймастăп. Тахçанах пуçланчĕ ку... Эпĕ сире Хорватие чĕнетĕп. Унта сирĕн валли Загребра студи уçăпăр, унта ÿкерĕнме пултаратăр. Чĕлхе вĕренме пулăшăпăр. Эпĕ йăлтах шухăшласа хутăм...”

Анчах кирек мĕнле юмахăн та вĕçĕ пур. Маршал Югославие таврăннă. Актрисăна вăл кашни спектаклĕтех карçинкки-карçинккипех чечек ярса парсан та хутшăнусем сĕвĕрĕлсе пынă. Окуневская çав вăхăталла паллă писателĕн Борис Горбатовăн арăмĕ пулни те витĕм кÿнĕ паллах.

Актриса йăлтах ăнланнă, анчах та нимĕн те улăштарма пултарайман. Пĕр банкет вăхăтĕнче ун еннелле çапла “пенĕ”: “Сутăнчăк юхха – илемне те, пултарулăхне те сутнăскер...” Окуневская шăлне çыртнă та... чĕнмен. Малашлăхри ĕç-пуçпа танлаштарсан ку чечек кăна пулнă-ха. Чăн та, актриса пуласлăха тĕшмĕртмен те.

### Иккĕмĕш тĕлпулу

...Пĕррехинче Окуневскаяна Кремльте иртекен концерта хутшăнма чĕннĕ. Ăна илме халăх комиссарĕ Берия кĕнĕ. Шăп палăртнă вăхăтра актриса çурчĕ умĕнче хура лимузин чарăннă. “Берия кăмăлĕ аванччĕ, – аса илнĕ Окуневская. – Вăл каланă тăрăх, эпир хальлĕхе Кремле каймастпăр иккен – унта лару вĕçленмен. Çурçĕр иртни виççĕре Берия лару тин кăна вĕçленнине, анчах та Коба ывăнса çитнине каларĕ. Кам вăл – Коба? Ха! Кам пултăр? Паллах, Иосиф Виссарионович Сталин! Ĕçме сĕнчĕ – унсăрăн мана киле ямассине палăртрĕ. Вăл мана пилĕкрен ыталаса илчĕ. Урăх нимĕн те астумастăп...”

### Виççĕмĕш тĕлпулу

Мĕн пулса иртнине пĕлсен Борис Горбатов аптраса ÿкнĕ – хĕрарăма мар, арçынна лăплантарма тивнĕ. Упăшкипе вĕсем пачах расна çынсем пулнă. Пĕрремĕш упăшкипе те, ВГИК режиссер уйрăмĕн студентчĕпе Митьăпа, юрату çыхăнтарман. Пурнăçĕнчи чи пысăк йăнăша Окуневская ашшĕ каланине итлеменнипе çыхăнтарать. Арçын хĕрне пĕр шайри çынпа кăна çемье çавăрма сĕннĕ-мĕн. Митьăпа пĕрлештересшĕн пулман вăл хĕрне. Çемье хăй тĕллĕн тенĕ пек арканнă. Шăп çак вăхăтра Татьянăн ашшĕне, асламăшне, иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшне арестленĕ. Çак самантра паллашнă та вăл Горбатовпа.

“Эпĕ ăна нихăçан та юратман, – тенĕ каярахпа Окуневская. – Малтанах хам та ăнланман-ха. Ăнланнă хыççăн мĕншĕн пăрахса тухса кайман-и? Çемьене мĕне тăрантармалла? Аннене, хĕрĕме... Сутăннă-и? Çапла, сутăннă. Анчах та камăн çылăх çук – мана чулпа петĕр. Хам ĕçлесе илме пуçласан тухса кайма пуçланăччĕ, анчах та Борис чĕркуçленчĕ, юратма тупа турĕ. Пăрахса каймашкăн хăюлăх çитмерĕ.

Вăт лагерьте вара çавăн пек çынпа тĕл пултăм! Лагерьте! Унта вĕт пĕрпĕрне перĕнме мар, пăхма та юрамасть. Çапах иксĕмĕр хушăра хĕлхем хыпса илнине тÿрех ăнланса илтĕмĕр. Анчах та туйăмсене палăртма юрамасть. Сиссен тÿрех ăна вăрман касма ăсатма пултараççĕ. Хăйĕн сăввисене мана вăл вăрттăн паратчĕ. Пĕртен-пĕр хут чуптуса куртăмăр. ...Çÿлте мĕн шатнă-ши: юр çăвать – нимĕн курăнмасть. Хуралçăсем пире чарăнма хушрĕç. Çак самантра вăл мана çепĕççĕн ыталарĕ, çемçе тути тутама перĕнчĕ. Çак самант ĕмĕрлĕхе тăсăлнăн туйăнчĕ. Юрать, тусăм çăлса хăварчĕ. Юр сайралнине курса вăл пирĕн питсен хушшине алсишне хучĕ...

### Юлашки тĕлпулу

Юлашки çулсенче Татьяна Кирилловна пĕччене пурăннă. “Динамо” метро çывăхĕнчи пĕр пÿлĕмлĕ хваттер. Сĕтелпуканран – шкап, çыру сĕтелĕ, диван, кресло.

“Мана пĕччене хăратмасть. Енчен те мана суйлама хушнă тăк – лагерь е çемьеллĕ пурнăç – эпĕ пĕрремĕшне суйласа илĕттĕм. Çук, эпĕ арçынсене курайман хĕрарăм мар. Вĕсем арçын пулма пăрахрĕç – çавă кăна. Халĕ лаша утланса чупмалла мар вĕт. Апат-çимĕçе те хăваламалла мар. Чунран савнă Алексей ĕмĕрлĕхех куçне хупнăшăн эпĕ савăнатăп та – юратăва çапах та туйса куртăм эпĕ, çав вăхăтрах çутă çак туйăм арканса ĕлкĕреймерĕ. Арçын тени лавкканна çÿреме пуçласан, хĕрарăма пулăшса апат пĕçерме, япала, савăт-сапа çума тытăнсан арçын пулма пăрахать вара. Ку – манăн шухăш. Арçыннăн чи малтан хĕрарăмшăн юлташ пулмалла. Паллах, унăн илемĕ те никама та чăрмантармĕ.

Мана çамрăк профессор килĕштеретчĕ. Эпĕ лагерьтен тухасса кĕтетчĕ вăл. Авланмарĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл академика çитрĕ. Хĕрĕм мана вăрçать: “Эсĕ ăсран тайăлнă пулĕ? Унăн дача, икĕ машина, хваттер. Унпа пĕрлешсен нимĕн пирки шухăшламасăр пурăнăн”. Манăн вара вăл вăхăтра нимĕн те çукчĕ. Анчах ун çине пăхрăм та чутах ăш-чик тавăрăнса тухмарĕ. Мĕнле пурăнас манăн унпа?

Эпĕ нумай вĕреннĕ çын мар. Хамăн пуçра мĕн пулса иртнине те пĕлместĕп. Философи кĕнекисене нихăçан та юратман. Ницше çырнисене алла илсессĕнех çывăрса каяттăм. Нумаях пулмасть юлташăмсем вырăс халăхĕн ваттисем калаинне парнелерĕç. Икĕ кĕнеке. Вуларăм та – кайса ÿкеттĕм: тĕнче ăслăлăхĕ икĕ кĕнекене шăнăçма пултарать. Сăмахран, “кÿршĕн кантăкран тунă çурчĕ тăррине чул ан ывăт – енчен те хăвăн çурт тăрри те çавăн пекех пулсан”... Çакна ăша хывакан пур тăк çынсем паян урăхларах пулмалла та вĕт...”

Константин Симонов çинчен те калаçма хирĕçлемен Окуневская. “Костяи? Унпа паллашнă чухне иксĕмĕр те 20-реччĕ. Ун чухне пирĕн хушăра нимĕн пайламалли те çукчĕ. Вăл, халĕ ун çинчен калаçнă пек, пит япăх çынах марччĕ. Пĕр сăмахпа – коммунист. Çирĕп кăмăллăччĕ. Хăйĕн карьерине пăсма пултаракан утăма нихăçан та тумастчĕ. Гений тесе калаймăп ун пирки. Сăввисем питĕ начарччĕ. Вĕсенчен пĕри – “Жди меня”. Проза аванрах пулса тухатчĕ унăн. Вăл вăрçа пĕлетчĕ те, ăнланатчĕ те. Горбатовпа танлаштарсан. Вăт вăл тăмсайччĕ. Унăн “Непокоренные” хайлавĕ – нимĕнпе те палăрманскер. Эпĕ, паллах, унăн кĕнекисене вуланă, анчах та... Симонов Серовăпа та питĕ лайăх пурăннă теме çук: иккĕшĕ тен пĕр-пĕрне улталатчĕç. Вăт Александровпа Орлова вара чăнласах – идеал шайĕнчеччĕ. Орловăн дачинче пулса курнине такам каласа кăтартнăччĕ мана. Питĕ чаплă-мĕн. Орлова унта йăлт хăй хăтлăх кĕртнĕ. Анчах та иккĕшĕ те вилнĕ хыççăн вĕсен тăванĕ дăчăна тара панă, Орлова япалисене чăлана тухса купаланă. Хăрушă... Любовь Петровнăпа эпĕ ĕçре кăна хутшăнаттăм.

Паллă çынсене эпĕ нумай пĕлнĕ. С.Раневскаяпа, сăмахран, “Пышка” ĕçре паллашрăмăр. Фанина питĕ кăсăклă... чунччĕ. Çук, ун пирки те гений тесе калаймастăп, анчах та – пултарулла. Юлашки çулĕсенче ăнмарĕ-ха унăн. Кил тĕрĕшре тирпейлекен хĕрарăм, путсĕр! – Раневская йыттине урама икĕ хутчен уçăлма илсе тухнăшăн пĕтĕм укçине сăптăрса илетчĕ. Актер пултарулăхĕсĕр пуçне Раневская шухăшлавĕпе те палăрса тăратчĕ. Çавăнпах вăл мĕн выляни йăлтах кăсăклăччĕ. Буржуа çемийинчен тухнăскер мĕншĕн актрисăна кайнă вăл? Ăнланмалла мар. Мана вăл: “Таточка! Ну, мĕнле пурăнса иртертĕм эпĕ хамăн пурнăçа? Ах, анчах! Яланах усăсăр ĕçпе аппаланатăп”, – тетчĕ. Паян унăн каларăшĕсем халăхра сарăлаççĕ. Хăйĕн пирки вара лесбиянка пулнă теççĕ. Тĕрĕсех-ши ку? Кам пĕлет. “Пышка” фильмра ÿкерĕннĕ чухне эпĕ гримеркăна хывăнса тăхăнаттăм. Раневская ситсе кĕчĕ. Эпĕ, хам та сисмесĕр, арçын пырса кĕнĕ пек, çи-пуçпа пĕркентĕм. Мĕн пĕлнĕ ун чухне эпĕ лесбиянство çинчен? Тепĕр тесен, утмăл çул каялла пулса иртнĕ туйăмсем çинчен мĕн калаçмалли пур?

Йăлтах хамăн кĕнекере каласа кăтартăп. Пĕрремĕш пайĕ тухнă хыççăн нумайăшĕ кÿренчĕ мана, хăшĕ-пĕри халĕ те калаçмасть. Ман тавра яланах тĕрлĕ сас-хура çÿренĕ, халĕ те çаплах. Эпĕ, 90-а çитсе пыракан карчăк, кама кирлĕ-ши паян?

Мĕн шухăшланине калани çынсене килĕшмест пулĕ çав. Çакăншăн пĕрре мар шар курнă эпĕ. Ман пата “окуневка” /Окуневăна килĕштерекенсене çапла каланă/ юлашкийĕсем килеççĕ те эпĕ мĕншĕн чĕлхене кăшт çыртманнипе кăсăкланаççĕ. Апла тунă тăк эпĕ те эпĕ пулмастăм! Эпир манăн пÿлĕмре мар, Аслă Канашăн депутачĕ, СССР пилĕк хут халăх артистки, тĕрлĕ премисем тăхăр хут лауреачĕ патĕнче тĕл пулнă тăк урăхларах хутшăнаттăмăр-ши вара? Çакăн хыççăн ухмахла ыйтусем пама пăрахаççĕ вара.

Хам пурăнса иртнĕ пурнăçпа кăмăллă эпĕ. Йывăр-и пурăнма? Çапла. Ăслисенчен пĕри каланă: çын характерĕ – унăн шăпи. Эпĕ вара çакăн патне хамăн ăспа çитрĕм”.

...”Ман çинчен çырнă чухне, ыйтатăп, “чаплă”, “пултаруллă” сăмахсемпе усă ан курăр, – тенĕ актриса корреспондентпа сывпуллашнă май. – Ыттине вара хăть те мĕн çырăр – эпĕ ватлăх кунăмра проституткăна çавăрăнни тарăнччĕнех...”



Эпĕ нихăçан та хавасланă юрă-кĕвве пĕччен итлеместĕп – манпа пĕрле унпа подъездчĕпех киленеççĕ.

* * *

– Ывăлăм, манăн 850 тенкĕ, аннӳн – 150. Аннӳн пурĕ миçе тенкĕ?

– 1000...

* * *

– Ывăлăм, шкултан вĕренсе тухрăн... Халĕ ĕнтĕ сана манпа пĕрле мăкăрлантарса ямашкăн ирĕк паратăп.

– Мĕн эсĕ, атте, эпĕ икĕ çул каяллах туртма пăрахнă.

* * *

– Чиперскерĕм, эсĕ мĕншĕн бокс секцине çырăннă?

– Каярахпа пĕлĕн...

* * *

Хĕрарăм пурнăçĕнче кăткăс икĕ ыйту: ытлашши килограмсем тата экс-упăшка – хăть те мĕн ту, вĕсем пурпĕр таврăнаççĕ.

* * *

– Тĕлĕнсе çитерейместĕп, – тет арçын арăмне. – Эрне каялла кăна туяннăччĕ ку кĕпене – сухи вара пĕчĕкленчĕ те...

– Эпĕ те тĕлĕнсе çитерейместĕп, – тет арăмĕ. – Пуçна çанă ăшне мĕнле чикме пултарнă-ха эсĕ?

* * *

– Тупмалли юмах калам-и? Сылтăм енче 2, сулахай енче 3. Мĕн пулать?

– Пĕлместĕп.

– Ансат вĕт-ха – 23!

* * *

Ватăлас кунăм çитсен эпĕ те мемуар çырăп-ха: "Онлайнри 50 çул" ят парăп ăна.

* * *

Сана кам та пулин усал турĕ-и? Канфет çитер. Татах усал турĕ-и? Татах канфет çитер. Унтан татах, татах... Çапла – унăн сахăр чирĕ пуçланиччен...

* * *

Упăшки – арăмне:

– Хутшăнусем пĕр евĕрленсе кайăлăхтарса çитерсен психологсем мăшăра роль выйлисем выляма сĕнеççĕ.

– Чăнах-и? Мĕнле вара вăл?

– Калăпăр, эсĕ Хĕрлĕ Калпак, эпĕ вара – Кашкăр...

– Юрать, хаваспах.

– Атя, кайса кукăльпĕçер...

* * *

– Мĕн, хаклăскерĕм, каллех сыпкаласа таврăнтăн-и?

– Эпĕ кăшт кăна.

– Ĕнер те кăшт кăначчĕ, виçĕмкун та, эрне каялла та...

– Эсĕ мĕнле сиснĕ вара ăна?

– Ара, çу уйăхĕ çитрĕ, эсĕ вара çаплах кашни каçах гараж умĕнчи юра тасатма çӳретĕн.

* * *

Адам вăранса кайнă. Тытса пăхать – аяк пĕр пĕрчи те çук! Мĕн пулнă? "Ĕнер лайăх кăна ĕçсе лартнă хыççăн кам кăшкăрашрĕ-ха: "Хĕрсем! Хĕрсем!" – тесе?" – илтĕнсе каять сасă.

* * *

– Эсĕ арăмна юрататăн-и?

– Паллах. Ыттисенчен мĕнпе начар вăл?

* * *

Вăл çие юлассинчен сыхланмалли эмеле яланах лăплантараканнипе арпаштарнă. Халĕ унăн 15 ача, анчах та вăл çакăншăн пачах пăшăрханмасть.

* * *

Çĕмăллăхсем-и? Йӳнетнĕ путевкăсем-и? Нимĕнпе те астараймăр – эпир çăвĕпех дачăра канатпăр, автансемпе пĕрлех тăратпăр, лартатпăр, çумлатпăр, шăваратпăр... Айккинелле кайса пăх-ха – кĕреçесене тӳрех вăрлаççĕ вĕт.

**☺И-ХИ-ХИК☺**

* * *

Çапла, тĕрĕсех, килĕшетпĕр: компьютер – усалтан. Анчах та ăна сӳнтерсен тата тепĕр иккĕшĕ тӳрех вăранаççĕ: телевизор тата сивĕтмĕш.

* * *

Каласакан арăма çакăн пек сăмахсемпе кăна пӳлме юрать: "Туянатăп", "Юрататăп", "Çапла, эпĕ ухмах!" тата "ПУШАР!!!"

* * *

Хĕрарăмсене ăнланса пĕтерме çук – пĕр арçынназ юратма та, çавăнтах вĕлерме те хатĕр.

* * *

Больницăна пуçне çавăрса çыхнă арçынна илсе пыраççĕ.

– Авланнă-и? – ыйтать медсестра медицина карттине çырнă май.

– Çук, машина таптарĕ, – хуравлать арçын.

* * *

Арçын килне ир енне кăна таврăнать. Алăка уçать кăна, арăмĕ йĕтĕрпе мĕнле шанлаттарать! Кусран çиçĕм тухса каять, арçын тăн çухатса кайса ӳкет. Пĕр вăхăтран тăн çавăрса илет хайхи, макăракан арăмне курать.

– Каçар, каçар, – йăлăнать арăмĕ. – Эсĕ çĕрлехи сменăра пулнине мансах кайнă эпĕ...

* * *

Хĕрарăмăн çăмăлланма вăхăт çитнипе васкавлă пулăшу чĕнеççĕ. Палатăна çамрăк тухтăр кĕрет. Кĕсйинчен телефон кăларать те: "ОК, гугл, – тет. – Çуратма мĕнле пулăшмалла?" Хĕрарăмăн сехĕрленнипе чарăлнă куçне курсан: "Ан шикленĕр, эпĕ шӳтлерĕм кăна", – тет. Çапах та хĕрарăма лăплантараймасть ку, хăрани-качкипе хăй мĕнле çуратнине сиссе те юлаймасть.

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ĔÇ РАБОТА

**126.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**249.Требуются рабочие в свинокомплекс** в Ленинградскую область. З/п 1500 в день. Вахта. Подробно по т. 89278496359.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев.** Т. 8-961-342-90-59.

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**197.Бурение скважин на воду.** Опыт, качество. Т. 89656876888.

**246.Бурение скважин** на воду до 50 м. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.Акция! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб., **песок,** гравмассу. Высокое кач-во. Д-ка. Т. 89603073151.

**3.Акция! Кольца колодезные** диам. 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Доставка манипулятором. **Бурение.** Т. 8-960-307-31-51.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ВИТЫЕ ТРУБЫ.** Т.: 89278441501, 674642.

**7.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Д-ка. Т. 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/колодца.** Доставка. Т. 89033468556.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Низкие цены. Т. 48-16-54.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 8-937-952-22-11.

**138.ОКНА, ТЕПЛИЦЫ, обшивка** домов, **двери** /сталь/. Гарантия 15 л. Скидки 40 %. Т. 89196624097.

**143.ТЕПЛИЦЫ** от производителя – от 5950 руб. Т. 89276682828.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

**174.МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя Т. 89276682828.

**180.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**232.Заменитель цельного молока** для телят и поросят. Т. 8-987-668-17-17.

**253.ДОМ** /6Х9/ с зем. участком 45 сот. в **д. Яргункино Аликовского р-на** /вода, газ, санузел в доме, 2-эт. гараж 18х6, надворные постройки/. Тел. 8-960-043-89-17, Слава.

## ШУТА ИЛĔР

# Килĕшӳллĕ тĕссем

**Тумтир суйланă чухне çак сĕнӳсене шута илни аван.**

**Хура** тĕс кĕрен, çутă симĕс, шурă, хĕрлĕ, сарă тата хĕрлĕ-сарă тĕссемпе килĕшсе тăрать.

**Шурă** тĕслĕ тумтир тĕттĕм кăвак, хĕрлĕ тата хура тĕссемпе илемлĕ курăнать.

**Хăмăр:** çутă кăвак, кĕрен, çутă хăмăр /беж/ тĕс, симĕс.

**Хĕрлĕ:** сарă, шурă, симĕс, тĕттĕм кăвак, хура, хура-хăмăр.

**Сарă:** кăвак, хĕрлĕ-кăвак, сăрă, хура.

**Çутă сарă:** сăрă, хăмăр, хĕрлĕрех тĕссем, кăвак, йĕпкĕн хĕрлĕ /пурпурный/.

**Симĕс:** ылтăн хăмăр, сарă-хĕрлĕ, ешĕл симĕс, сарă, хăмăр, сăрă, хура.

**Çутă симĕс:** хăмăр, сарă-хăмăр, сăрă, тĕттĕм кăвак, хĕрлĕ.

**Кăвак:** хĕрлĕ, сарă, хăмăр, кĕрен, шурă, сарă, сарă-хĕрлĕ.

**Тĕттĕм кăвак:** çутă кăвак, сарă-симĕс, хăмăр, сăрă, çутă сарă, симĕс, хĕрлĕ, шурă.

**Кăвак-симĕс /бирюзовый/:** тĕттĕм хĕрлĕ, сарă, хăмăр, хĕрлĕ-кĕрен.

**Кĕрен:** хăмăр, шурă, симĕс, çутă кăвак, симĕсрех кăвак, сăрă тата олива тĕсĕ.

**Çутă хăмăр:** хăмăр, çутă кăвак, хура, шурă тата изумруд тĕслипе.

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Сырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 17.04.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8305. Заказ 1445.